24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
22
ЫТЛАРИКУН
170 (5885) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИН юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 19-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Хĕвеланăç енчи войскăсен Главнокомандующине, Совет Союзĕн Маршалне С. К. Тимошенко юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Хĕвеланăç енчи войскăсен Главнокомандующине, Совет Союзĕн Маршалне С. К. ТИМОШЕНКО юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 19-мĕш.

Пур çĕрте те перекетлĕх пултăр

Пирĕн Тăван çĕршыв Германи фашизмне хирĕç çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçă туса пырать. Çак вăрçа ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе пирĕн хамăрăн мĕнпур вăй-хăвата хурса, хамăрăн пĕтĕм средствăсене мобилизацилесе ĕçлес пулать. Халăх хуçалăхĕнчи тирпейсĕрлĕхе хирĕç, Управлени аппаратĕнчи усăсăр тăкаксене хирĕç, кирек мĕнле тухăçсăр тата тĕллевсĕр расходсене хирĕç халĕ нихăçанхинчен те вăйлăн кĕрешес пулать. Фронта мĕн кирлине пурне те парас тесен, тăшмана хăвăртрах çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшас тесен, халĕ пур çĕрте те тата пур ĕçре те нихăçанхи пек мар вăйлă перекетлĕх пулмалла.

Мирлĕ строительство вăхăтĕнче те Ленин—Сталин партийĕ пирĕн халăха оборудованисемпе, чĕртаварпа, материалсемпе, топливопа, электроэнергипе перекетлĕн усă курма, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме, совет укçин кашни пусне упрама, çапла вара Тăван çĕршыва май пур таран нумайрах усă кӳме вĕрентнĕ. Çак задача халĕ, вăрçă пынă вăхăтра, татах та пысăкраххăн тухса тăрать. Мĕншĕн тесен, перекетлесе хăварнă чĕртаварăн кашни килограмĕ, тухăçлăн тăкакланă укçан кашни пусĕ çĕршыв оборонине тĕреклетме, нумайрах продукци туса кăларма май парать. Мĕншĕн тесен, перекетлесе хăварнă металăн кашни татăкĕ Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал туса кăларассине ӳстерме май парать.

Пур çĕрте те тата пур ĕçре те перекетлĕх пулмалла тăвасси вăл—совет патриочĕн тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртсе пырассине, фашистла бандăсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен пирĕн мухтавлă боецсене ĕçпе пулăшассине пĕлтерет. Пур ĕçре те перекетлĕх тăвас тĕлĕшпе кĕрешесси — рабочисен, колхозниксен, служащисен, производство командирĕсен хальхи вăхăтри чи кирлĕ, чи паха обязанноçĕ пулса тăрать.

Халĕ фабрик-заводсенче, шахтăсенче, çулсем çинче, колхозсенче, МТС-сенче тата ытти учрежденисемпе предприятисенче перекетлĕхшĕн кĕрешесси сарăлса пырать. Çак паха движени пур майсемпе те вăйлатса пырас пулать. Халăх пурлăхне май килнĕ таранах перекетлес пулать, ăна типтерлĕ хуçа пек тыткаламалла. Перекетлĕхшĕн кĕрешесси халĕ ӳссе пыракан производствăллă çĕкленĕвĕн уйрăлми пайĕ пулса тăмалла.

Çĕршыври предприятисемпе учрежденисенче ку тĕлĕшпе лайăх пример кăтартса ĕçлекен цехсем, сменăсем, стахановецсем питех те нумай. Пирĕн Чăваш республикинче те вĕсем сахал мар.

Канашри депо рабочийĕсем хушшинче хальхи вăхăтра производствăллă активлăх уйрăмăнах вăйлăн çĕкленсе пырать. Рабочисемпе служащисем государствăна нумайрах усă кӳрес тесе, мĕнпур вăйпа тăрăшаççĕ. Чапа тухнă машинистăн Лунин юлташăн меслечĕсемпе ĕçлесе, депори Терюкалов, Николаев, Воронцов, Сагитов машинистсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ, куллен темиçешер центнер топливо перекетлесе хăвараççĕ. Поездсене пысăк ăнăçлăхпа илсе çӳреççĕ, пĕчĕк ремонтсене çул çинчех тăваççĕ. Депо коллективĕ июнь планне пур енĕпе те ирттерсе тултарнă. Кăмрăк тата горючи чылай перекетлесе хăварнă. Депо начальникĕ Прокофьев юлташ комплекслă бригадăпа икĕ локомотив юсама хушнă. Вĕсене юсама норма тăрăх 28 сехет кирлĕ пулнă. Стахановецсем, чăн-чăн совет патриочĕсем пек ĕçлесе, хăвăртрах çĕнтерӳ тума фронта пулăшас тесе, çав ĕçе 12 сехетрех туса çитернĕ.

Çĕмĕрле МТС-че фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем йышăннă, вĕсенчен чылайĕшĕ трактористкăсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ. Пелагея Варфоломеева хăйĕн планне ытлашшипех тултарнă, çавăнпа пĕрлех горючине чылай перекетленĕ. Çакă ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшни, ăна пулăшни пулать.

Республикăри комсомолецсем халĕ тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Çĕмĕрлери комбинат территоринче 17 тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Канашри вагонсем юсакан заводра отходсем нумай пуррине палăртнă. 56 комсомолец виçĕ кун хушшинче 38 тонна ытла металл пухнă. Колхозсемпе МТС-сенчи çамрăксем те ку тĕлĕшпе активлăн ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çамрăк колхозниксем 19 тонна ытла, Елчĕк районĕнче 15,7 тонна металл пухнă. Государствăшăн пысăк вырăн йышăнса тăракан çак ĕçе çамрăксен малалла та вирлĕн туса пымалла.

Тылри хĕрӳллĕ ĕçе пионерсем хутшăннине пур енчен те мухтамалла. Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ шкулти пионерсен отрячĕ, Слепнева ертсе пынипе, государствăна икĕ тонна ытла тимĕр-тăмăр пухса панă. Уншăн илнĕ укçине пĕтĕмпех оборонăна тĕреклетес çĕре параççĕ. Иккĕмĕшпе çиччĕмĕш номерлĕ шкулсенчи пионерсен отрячĕсем те пĕрер тонна тимĕр-тăмăр пухса панă. Утильсырье конторин Шупашкарти бази плана ытлашшипех тултарса пырать, государствăна çĕршер тонна тимĕр пухса парать.

Çĕршывăн мĕнпур ресурсисене фронт валли, тăшмана çĕмĕрсе тăкма мобилизацилемелле,—акă мĕншĕн тăрăшаççĕ Шупашкарти пионерсем. Çак паха ĕçе пур çĕрте те анлăн сарса пырас пулать.

Перекетлĕх халĕ промышленноçра кăна мар, халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те вăйлă пулмалла. Колхозсемпе совхозсенче, МТС-сенче, çулсем çинче, управлени аппаратĕнче, пĕр сăмахпа каласан, халăх хуçалăхĕн кашни участокĕнче перекетлĕх, тирпейлĕх хуçалăхшăн тăрăшни кирлĕ. Çак енĕпе эпир халĕ çителĕксĕр ĕçленĕ-ха, малашне пирĕн перекетлĕхшĕн большевикла кĕрешӳ пуçарса ямалла. Чĕртавара, материалсене, топливăна, горючисене перекетлемелли çĕнĕ майсем шыраса тупса, вĕсене хăвăрт ĕçе ямалла. Çĕнĕ ресурссене тупса палăртмалла, промышленность валли чĕртаварсен çĕнĕ резервисене тупса ĕçе ямалла.

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем кашни пульăпа, кашни тупăпа, кашни снарядпа усăллăн усă курма тăрăшаççĕ. Эпир, тылра ĕçлекенсем, чĕртаварăн, топливăн тата материалсен кашни килограмĕпе, кашни станокпа, кашни тракторпа перекетлĕн усă курассишĕн кĕрешме тивĕçлĕ. Çакă вара Хĕрлĕ Çара чăннипех пулăшни, унăн тылне çирĕплетессишĕн, хамăрăн Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетессишĕн кĕрешни пулĕ.

ССР Союзĕпе Чехословаки хушшинче тунă килĕшӳ

Июлĕн 18-мĕшĕнче Лондонра ССР Союзĕпе Чехословаки Республики хушшинче Килĕшӳ туса алă пуснă. СССР ячĕпе Килĕшӳ çине ССР Союзĕн Великобританири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Майский юлташ алă пуснă, Чехословаки Республики ячĕпе Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ян Массарик алă пуснă. Аялрахра Килĕшӳ текстне пичетлетпĕр.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви хушшинче тунă килĕшӳ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Чехословаки Республикин Правительстви çакăн пек килĕшӳ тунă:

1 Икĕ Правительстви те пĕр-пĕрин патне посланниксене яма килĕшнĕ.

2. Гитлерла Германие хирĕç пыракан хальхи вăрçăра икĕ Правительстви те пĕр-пĕрне тĕрлĕ пулăшу парса пыма пулаççĕ.

3. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн территоринче чехословаксен национальнăй войскисен чаçĕсене тăвассипе килĕшет, çав чаçсене ертсе пыракан командирсене, Совет Правительствипе килĕшсе, Чехословаки Правительстви уйăрса лартать. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн территоринчи чехословаксен войскисен чаçĕсем Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн çарĕсен Верховнăй Командованийĕ ертсе пынă тăрăх кĕрешеççĕ.

4. Çак Килĕшӳ ăна çирĕплетсе алă пуснă вăхăтран пуçласа çийĕнчех вăя кĕрет тата ăна ратификацилемеççĕ.

5. Çак Килĕшĕве икĕ экземплярпа çырнă, кашнинех вырăс чĕлхипе тата чехословаки чĕлхипе çырнă. Икĕ текстăн вăйĕ те пĕртанах шутланать.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Великобританири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ МАЙСКИЙ.
Чехословаки Республикин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ ЯН МАССАРИК.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕпе Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссариатне пĕр комиссариат, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ туса пĕрлештересси çинчен

Мирлĕ вăхăтран ĕçĕн вăрçă чухнехи условийĕсем çине куçнă май, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕпе Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссариатне пĕр комиссариат, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ туса пĕрлештерни кирлĕ тесе шутлас.

Çакна май, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕпе Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссариачĕн союзлă тата автономлă республикăсенчи, крайсемпе облаçсенчи оргăнĕсене пĕрлештерес.

Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулма Лаврентий Павлович Берия юлташа уйăрса лартас.

Всеволод Николаевич Меркулов юлташа Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн пĕррĕмĕш заместителĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 20-мĕш.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче политикăллă пропаганда оргăнĕсене реорганизацилесси тата çар комиссарĕсем пулмалла тăвасси çинчен кăларнă Указа Тинĕс-Çар Флотĕнче пурнăçа кĕртесси çинчен

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче политикăллă пропаганда оргăнĕсене реорганизацилесси тата çар комиссарĕсем пулмалла тăвасси çинчен 1941 çулти июлĕн 16-мĕшĕнче кăларнă Указа тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çар комиссарĕсем çинчен çирĕплетнĕ положенине Рабочисемпе Хресченсен Тинĕс-Çар Флотĕнче те пурнăçа кĕртмелле тунă.

Çакна май политикăллă пропаганда управленийĕсемпе отделĕсене урăхлатса, Рабочисемпе Хресченсен Тинĕс-Çар Флочĕн политикăллă Управленийĕсем тата политикăллă отделĕсем тăваççĕ. Тинĕс-Çар Флочĕн мĕнпур карапĕсенче, чаçĕсемпе соединенийĕсенче, штабĕсенче, военно-учебнăй заведенисенче тата учрежденисенче çар комиссарĕсем, карапсен подразделенийĕсенче, чаçсенче тата учрежденисенче—политикăллă руководительсем пулаççĕ.

В. Г. Деканозов юлташ Мускава килнĕ

Кăçалхи июлĕн 19-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ, ССР Союзĕн Германири Посолĕ пулнă В. Г. Деканозов юлташ Германирен Мускава килнĕ.

ХРОНИКА

ССР Союзĕн Совнаркомĕ пĕррĕмĕш рангри Çар Комиссарне Е. А. Щаденкона, танк войскисен генерал-лейтенантне Я. Н. Федоренкона, авиацин генерал-лейтенантне П. Ф. Жигарева, интендант службин генерал-лейтенантне А. В. Хрулева Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕсем пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Австралири шахтерсен федерацийĕ Сталин юлташ патне янă телеграмма

Сталин юлташ ячĕпе Сиднейран (Австралия) Австралири шахтерсен федерацийĕнчен çакăн пек телеграмма килнĕ:

«**Премьер-министра, Сталина.**
Мускав. СССР.

Германи фашизмĕн тапăнса кĕнĕ çарĕсене хирĕç чаплăн кĕрешекен халăха тата Хĕрлĕ Çара Австралири шахтерсен федерацийĕ сывлăх сунса саламлать.

Пирĕн тăвансем—шахтерсем кĕрешӳвĕн малти фрончĕсенче пулнине эпир пĕлетпĕр, тата эпир фашизма хирĕç пыракан вăрçăра практикăллă пулăшу парас тĕлĕшпе хамăрăн вăй çитнĕ таран пурне те тума пулатпăр. Шахтерсен федерацийĕ, индустри хăвачĕпе усă курса, çакна пурнăçа кĕртмелле тăвассине асăрхаса тăрĕ.

Великобританипе Совет Союзĕ хушшинче тунă союза эпир ырлатпăр».

Телеграмма çине çаксем алă пуснă: Нельсон, Грант, Канингам, Келлок, Шродер тата Лоуден. (ТАСС).

Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ тунине ĕççыннисем саламлаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июлĕн 21-мĕш. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри ĕççыннисем халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă хыпара пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. СССР Верховный Совет Президиумĕн Указне радиопа панине пиншер çын итленĕ.

— Эпир Сталин юлташ ертсе пынипе социализм строительствин пур участокĕсенче те пысăк çитĕнӳсем турăмăр, вăл ертсе пынипе фашизма çĕмĕрсе тăкăпăр,—терĕ «Большевик» заводри стахановка Воробьева юлташ.

Древкомбинатри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен шухăш-кăмăлне палăртса, Миронов юлташ çапла каларĕ:

— Сталин юлташ ертсе пынипе граждан вăрçи çулĕсенче пирĕн çĕршыв ютçĕршыв интервенчĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Ăçта Сталин — унта çĕнтерӳ. Юратнă атте, çулпуç аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар ирсĕр фашизма ĕмĕрлĕхех тĕп тăвĕ. Эпир, рабочисем, тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара мĕн кирлĕ, çавсене йăлтах туса парăпăр.

Сталин—тăшманшăн аçа-çиçĕм пек хăрушă

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Сталин юлташа Совет Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕ тăвасси çинчен кăларнă Указа Исаково ялĕнчи (Красноармейски р.) колхозниксем радио тăрăх итленĕ. Колхозниксем çак историллĕ Указа питĕ ырлаççĕ. Граждан вăрçи участникĕ, халĕ ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçлекен М. Порфирьев юлташ акă мĕн калать:

— Тăшманшăн Сталин ячĕ яланах хăрушă пулнă, Сталин юлташа Социализмла державăн хĕçпăшаллă вăйĕсен пуçлăхĕ туни фашистсемшĕн питех те хăрушă. Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар, Совет халăхĕ Гитлерăн йыткĕтĕвне ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хурать.

Сталин—совет халăхĕн аслă полководецĕ! Сталин ертсе пынипе эпир çĕнтеретпĕрех!

Совет халăхĕн аслă полководецĕ

Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ тăвасси çинчен пĕлтернĕ хыпара Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем питĕ пысăк хаваслăхпа итлерĕç. Халĕ кашни рабочи, служащи пирĕн аслă Сталин юлташ граждан вăрçи вăхăтĕнче фронтсене ертсе пынине, вăл ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмансене çĕмĕрсе тăкнине аса илеççĕ.

— Царицын оборони, çамрăк совет республикин столицине, пролетарилле центрсене—Мускава тата Петрограда продовольстви тăратни, контрреволюцилле çара çĕмĕрсе тăкни—пурте Сталин юлташ ертсе пынипе пулнă,—теççĕ рабочисем.

Совет влаçĕ умĕнче ответлă задачăсем тăнă чухне этемлĕхĕн геннийĕ Владимир Ильич Ленин пĕтĕм ĕçе хăй ертсе пынă. Сталин Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ, çавăн пекех Оборона Халăх Комиссарĕ пулни гитлерла Германие хăвăрт çĕмĕрсе тăкма май парать.

— Сталин пирĕн çĕнтерӳллĕ кĕрешĕве хăй ертсе пырать. Вăл—пирĕн аслă полководец,—çапла калаççĕ совет патриочĕсем.

Югослави посланникĕ г-н Гаврилович Мускавра

Кăçалхи июлĕн 19-мĕшĕнче Югославин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ г-н Гаврилович Мускава килнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 19-мĕшĕнче Псков, Полоцк-Невель, Смоленск тата Новоград-Волынски енĕсенче вăйлă çапăçусем пулса пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

Çанталăк начар тăнă пулин те, пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсене тата унăн авиацине пĕтерес тĕлĕшпе çапăçнă.

* * *

Балти тинĕсĕнче разведка противник транспорчĕсен пысăк караванне тупса палăртнă, çав каравана вăйлă конвой сыхласа пынă. Пирĕн авиаци, торпеднăй катерсем тата миноносецсем атака туса, противникăн 11 транспортне, пĕр танкерне шыва путарнă тата пĕр истребительне персе ӳкернĕ. Çак çапăçура пирĕн пĕр самолет тата пĕр торпеднăй катер пĕтнĕ, унăн командине çăлса хăварнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Прокопенко бомбардировщикĕн экипажĕ фашистсен 12 самолетне персе антарнă. Малтанах икĕ хут вĕçсе кайнă чух, стрелок-радист Канев тăватă «Мессершмитта» персе ӳкернĕ. Виççĕмĕш хут вĕçсе кайнă чух Прокопенко самолечĕ хамăрăн ытти 9 бомбардировщик хыçĕнче вĕçсе пынă, противникăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Тăшман истребителĕсем Совет летчикĕсем çине тапăннă. Канев тăшман атакине сирсе янă та, каллех пĕрин хыççăн теприне тăватă «Мессершмитта» персе антарнă. Çак кунсенче, тăваттăмĕш хут вĕçсе кайнă чухне, Прокопенко юлташ самолечĕ фашистсен вăрманта пытанса ларнă танкĕсен колоннин юлашкисем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшман зенитчикĕ персе янă снарядăн ванчăкĕ самолетăн управленине кăштах сиен тунă. Сиен курнă самолет çине пиллĕк «Мессершмитт» ыткăннă. Прокопенко юлташ хăвăртах çӳлелле вĕçсе хăпарнă, вара тăшмансен самолечĕсем Канев юлташ пулемечĕсен кĕпçи умне пырса тухнă. Татах икĕ «Мессершмитт» çĕр çинелле персе аннă. Стрелок-радист Канев юлташ, йывăр аманнă пулин те, тăшмансем çине пеме чарăнман, кун хыççăн татах фашистсен икĕ самолетне персе антарнă. Тăшман истребителĕсем Прокопенко юлташ машинине вут тĕртсе янă тата ун шассине сиен тунă. Прокопенко юлташ самолета питех те ăстан антарса лартнă, пĕтĕм экипажа çăлнă.

* * *

Сывлăша сăнаса тăракан пост И. высота районĕнче противник парашютистсен десантне антарса хăварни çинчен пĕлтернĕ. Тăшман анса юлнă çĕре çийĕнчех танксем тата Н-ски чаçĕн мотострелковăй группи кайнă. Десант анса юлнă высотана танксем çавăрса илнĕ. Противник патне çитесси 400 метра яхăн юлсан, старший сержант Куранов пулеметран пеме пуçланă. Çав вăхăтра мотострелковăй группа боецĕсем тăшмана тылран çавăрса илнĕ. Вĕсем çав тери хăвăрт атака тунă, темиçе минута иртсен, высота çинче нимĕçсем питех те нумай вилсе юлнă. Танксем тата пехота пенипе, нимĕçсен 120 салтакĕсене тата офицерĕсене вĕлерсе пĕтернĕ, ытти 80 салтакĕ хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна парăннă.

* * *

П. местечко патĕнче партизансен отрячĕ тăшман танкĕсен группи çине хăюллăн тапăннă. Партизансем танксене çĕрле, противник тĕттĕм вăрманти çул тăрăх сборнăй пункта пынă чух, атакăланă. Противникăн малта пыракан танкĕ лайăх пытарса тунă шăтăка кĕрсе ӳкнĕ. Ун çине иккĕмĕш танкĕ пырса тăрăннă. Кайра пыракан машинăсем аяккалла пăрăннă, анчах вĕсем те тарăн шăтăксене кĕрсе ӳкнĕ. Партизансем алтнă шăтăксене темиçе минута хушшинче 5 танк кĕрсе ӳкнĕ. Вăрмантан пăшал сассисем илтĕннĕ.

Вăрман çине персе, танксем каялла кайма пуçланă, анчах вĕсем çул çинче пĕрле сыхса хунă гранатăсем çине пырса лекнĕ. Татах 5 машина стройран тухнă.

* * *

Румынири Бырлад ятлă хулана Германи чаçĕсем валли продовольстви тиенĕ лавсем пынă. Лавсене нимĕçсен 8 салтакĕ тата румынсен 25 салтакĕ сыхласа пынă. Вĕсен командирĕ нимĕç лейтенанчĕ пулнă. Бырладран инçех мар вырăнта лавсене Румынири хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсен пысăк ушкăнĕ кĕтсе илнĕ. Ушкăнран çакăн пек сасăсем илтĕннĕ: «Парăр çăкăр!», «Пирĕн ачасенчен вĕсен ашшĕсене туртса илтĕр, халĕ ĕнтĕ тырпула çаратса каяççĕ!», «Нимĕçсене Румыни тырпулне памастпăр!». Гитлер салтакĕсем çине чулсемпе пеме пуçланă. Лавсене сыхласа пыракан румын салтакĕсем хресченсемпе пĕрлешнĕ те нимĕç салтакĕсене хĕçпăшалсăрлатнă. Пĕтĕм продовольствине хресченсем ярса илнĕ.

* * *

Окер Вяйне—Финляндин 26-мĕш полкĕнчи 2-мĕш ротăри 1-мĕш взводăн салтакĕ, ытти салтаксемпе пĕрле Хĕрлĕ Çар енне куçса каçнăскер, Финляндие юнлă вăрçа туртса кĕнĕ Маннергеймпа унăн алйыттисем çинчен питĕ тарăхса каласа парать. 47-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчи салтак Карттинен Аарис Арттури çапла каласа панă: вĕсен полкĕн питех те нумай салтакĕсем вăрçа хирĕç шухăш-кăмăллă. Гитлеровецсем тата белофинсен шюцкорĕсем Финлянди халăхне вăйпа ирĕксĕрлесе вăрçа илсе каяççĕ. Куçса каçнă салтаксем пурте çĕршывра экономика тĕлĕшпе пурнăç питех те йывăрланса çитни çинчен каласа параççĕ. Финлянди халăхĕ выçă ларать. Финляндине хăйсен колонийĕ туса хунă гитлерла бандитсем çине Финлянди халăхĕ кунсеренех ытларах та ытларах кураймасăр пăхать.

Совет железнодорожникĕсем Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ япаласене хăвăрт турттарассине хăйсен пурнăçне шеллемесĕр туса пыраççĕ. Новокузнецки вагоннăй участокри слесарь Антонов юлташ, хăйĕн подручнăйĕпе пĕрле, вагона 7 сехет хушшинче юсаса çитернĕ, норма тăрăх 72 сехет ĕçлемелле пулнă. Чăваш АСС Республикинчи Канаш хулинчи паровозсен депоне каçхине локомотив юсама илсе пынă. Пĕр кун кунĕпех ĕçленĕ пулин те, слесарьсем Золотухин, Ефремов, Волков, Абросимов, Толмозов, Сперанский тата ытти юлташсем, хăвăрт тумалли ĕçе вăраха ярас мар тесе, çĕрлехи сменăра ĕçлеме юлнă, паровоза депоран юсаса кăларнă. Ирхине çак мухтавлă патриотсем канма кайма килĕшмен, вара срокченех тата тепĕр паровоз юсаса кăларнă. Горький чугунçулĕ çинчи Шахуньяри паровозсен деповĕнчи слесарьсем Малыгин тата Прытов юлташсем тендера 48 сехет хушшинче юсаса кăларнă. Ĕлĕк çав ĕçе 4 çын 6 кун хушши тунă пулнă. Томск чугунçулĕ çинчи Новосибирскри депора паровозсем юсас срока 20—30 сехет чухлĕ чакарнă. Л. М. Каганович ячĕпе тăракан чугунçул çинчи Надеждински тата Верхотурски паровозсен деповĕсенчи машинист-кривоносовецсем Верзилов, Рогожников, Маклаков тата ытти юлташсем поездсемпе нормăран пăхнинчен 200—400 тонна ытла турттараççĕ.

Машинист Степанюк юлташ фронт валли япаласем тиенĕ поезда илсе пынă. Кĕтмен çĕртен пĕлĕтсем хушшинчен фашистсен самолечĕ вĕçсе тухнă та поезд çине пеме пуçланă. Пулясем тендере шăтарнă тата машиниста амантнă. Сурана çыхнă та, Степанюк юлташ питех те паха груза фронта вăхăтра çитернĕ.

Июлĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Полоцк-Невель, Смоленск тата Новоград-Волынски енĕсенче çĕрĕпех вăйлă çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

Июлĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци противникăн танковăй тата моторизованнăй чаçĕсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçусем туса пынă.

Тĕрĕс шута илнĕ тăрăх, июлĕн 18-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата çĕр çинче пирĕн авиаци противникăнне, малтан пĕлтернĕ пек 32 самолет мар, 71 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Авиаразведка тăшман совет хулисенчен пĕрин çине сывлăшран килсе тапăнма хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ. Федоров капитан ертсе пыракан самолетсен группине фашистсен пĕр çĕре пухăнса ларнă самолечĕсене пĕтерсе тăкма приказ панă. Фронт линийĕ урлă питĕ çӳлтен вĕçсе каçса, совет бомбардировщикĕсем тĕплĕн маскировка тунă тăшман аэродромне тупнă, çав аэродром çине вилĕм кӳрекен металл тоннисене тăкма пуçланă. Стрелок-радистсем Дзюба, Семенов тата ыттисем хăйсен пулемечĕсенчен çавтери вăйлăн пеме тытăннă. Аэродромра тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă бомбардировщикĕсен ишĕлчĕк купи çеç тăрса юлнă.

* * *

Белофинсен отрячĕ 10 шлюпка çине ларса пирĕн войскăсен тылне анса юлма хăтланнă. Пулемет подразделенийĕн командирĕ Решетников юлташ, тăшман шлюпкисене çыран патне çывăхах ярса, вĕсем çине пеме пуçланă. Ултă шлюпкăна тата вĕсем çинче ларса пыракан белофинсене йăлтах пĕтерсе тăкнă. Ытти шлюпкисем каялла тарнă.

* * *

Персе сиенленĕ нимĕç самолечĕн Б. местечкăра ирĕксĕрех çĕре анса ларма тивнĕ. Фашистсен тăватă летчикĕ, граждăнла тумтирсем тăхăнса, вăрмана кĕрсе пытанма хăтланнă. Колхозник Василий Шамардин çак иккĕлентерекен ют çынсене курнă та, вĕсене тытса чарма хăтланнă. Тăшмансем пеме пуçланă. Пăшал сассине илтсе колхозниксем чупса тухнă та, фашистсене хупăрласа илнĕ. Нимĕçсем хирĕç тăнă. Хире-хирĕç пеме пуçласан, тăшмансен виçĕ летчикне вĕлернĕ, тăваттăмĕшне тыткăна илнĕ.

* * *

Жлобин çывăхĕнче нимĕçсен 35 салтакĕпе пĕр унтер-офицерĕ хăйсен ирĕкĕпех тыткăна парăннă. Хĕрлĕ Çар енне куçса каçнăскерсем пурте пĕр шухăшлă пулса çапла каланă: «Эпир вилеслех ывăнса çитрĕмĕр, пирĕн юлашки вăйсем те пĕтсе çитеççĕ ĕнтĕ. Хăйсен пурнăçне сыхласа хăварас тесе, нимĕç салтакĕсем чылайĕшĕ Гитлерăн вăрçă машинин хĕскĕчĕнчен çăлăнса тухасшăн». Унтер-офицер Рихард П. çапла каланă: салтаксем хăйсем хушшинче доносчиксем çуккине шанса тăнă çĕрте пур çĕрте те «Вăрçă хăçан пĕтет-ши?» текен пĕртен-пĕр тема тăрăх калаçусем пыраççĕ. Киле юлнă тăванĕсемпе çывăх çынсенчен илекен çырусем нимĕç салтакĕсене пурне те хумхантараççĕ. «Хамăн Гамбургри тăвансенчен эпĕ илнĕ юлашки çырусем, — тесе каласа парать пирĕн енне тарса каçнă Фридрих Б.,—час-часах бомбăсем пырса пăрахнипе халран кайнă çынсен, вăрçăпа тата выçăпа ĕнтĕркесе çитнĕ çынсен асаплă сасси пулса тăраççĕ. Ранецра çавнашкал çырусем чиксе çӳрекен, ывăннă, халран кайнă тата нимĕнпе те кăмăлне пусарайман салтак вăрçма пултараймасть тата вăрçасшăн та мар».

* * *

З. районĕнче пулса иртнĕ пысăк çапăçусем хыççăн пирĕн санитарсем çапăçу хирĕсенче çĕрле аманнисене пуçтарса çӳренĕ. Пысăк мар вăрманта санитарсем Германин виçĕ салтакне курнă, вĕсем вилнĕ çынсен кăсйисенче темскер ухтарнă. Мародерсене тытса чарнă. Нимĕçсен кăсйисемпе сумкисенче тĕрлĕрен хаклă япаласем, çавăн пекех совет тата Германи укçисене тупнă.

* * *

Вăрçăн малтанхи эрнисенче Румыни çарĕ калама çук пысăк çухатусем тунипе хăраса ӳкнĕ пирки, Гитлер тарçи генерал Антонеску вăрăсенчен, бандитсенчен тата ытти çапкаланчăксенчен çĕнĕ «отборнăй чаçсем» йĕркелеме приказ панă. Бухарестра закон кăларнă, çав закон тăрăх, «пĕр-пĕр преступленисемшĕн судпа айăпланă» уголовниксем, вĕсем фронта кайма кăмăл тусан, наказанирен хăтăлаççĕ. Халĕ ĕнтĕ Румыни правителĕсем хăйсем пек элементсенчен çар чаçĕсем туса йĕркелессе шанаççĕ.

* * *

Заводсемпе фабрикăсенче, колхозсемпе совхозсенче геройла ĕçлесе, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем фашизма çĕнтерме пулăшаççĕ. Средуралмедьзаводра кăмрăк турттарса тăнă çĕрте виçĕ уйăх каялла 10 рабочи ĕçленĕ пулнă. Мотовоз машинисчĕ Крылосов юлташ çав ĕçре халĕ пĕчченех отлично ĕлкĕрсе пырать. Ялхуçалăх машиностроенийĕн Ростоври Сталин ячĕпе тăракан заводĕнче модельщиксен бригади 11—12 кун хушшинче тумалли задани илнĕ, çав задание бригада 5 кун хушшинче тултарнă. Ленинградри Кировски заводăн турбиннăй цехри лаборатори сотрудникĕсем слесарĕн ĕçтухăçлăхне 10—15 хут ӳстерекен çĕнĕ приспособлени туса хатĕрленĕ. Ижевскри металлурги завочĕн прокат цехĕнче июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа пур рабочисем те пĕр кунхи заданине ирттерсе тултараççĕ. Орджоникидзе крайĕнче тырпулсене пысăк хăвăртлăхсемпе пухса кĕреççĕ. Николенко ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем тулăна капана хывнă çĕрте ĕçлесе кункаçиччен 3—4-шар норма тултараççĕ. Шангрыкски машинно-тракторнăй станцин комбайнерĕ Демцов юлташ норма тăрăх 8 гектар вырăнне кашни кун 18—25 гектар тырă вырать. Омск облаçĕнчи Приуральски районри «Красный рыбак» колхоз членĕсем вăрçăчченхипе танлаштарсан виçĕ хут нумайрах пулă тытаççĕ, Василий Вилко звени вара план тăрăх çулталăк хушшинче тытма палăртнинчен те нумайрах пулă тытнă.

Июлĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 20-мĕшĕнче Псков, Полоцк-Невель, Смоленск тата Новоград-Волынски енĕсенче кунĕпех вăйлă çапăçусем пынă. Фронтра войскăсен положенийĕнче нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулса иртмен.

Нимĕç войскисен тылĕнче партизансен ĕçĕсем ăнăçлăн саралса кайнă. Партизансен отрячĕсем противника пысăк çухатусемех кӳреççĕ.

Çанталăк условийĕсем лайăхах пулман пулсан та, пирĕн авиаци противникăн мотомехчаçĕсене тата унăн авиацине пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçусем туса иртнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, июлĕн 20-мĕшĕнче малтанхи çур кун хушшинче противникăнне сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче 25 самолет пĕтерсе тăкнă.

Балти тинĕсĕнче пирĕн авиаци противникăн пĕр миноносецне путарнă.

* * *

Пирĕн разведка противник наступлени тума хатĕрленсе Н. пункчĕ патне автотранспортпа артиллери пит нумай пухса тăратни çинчен пĕлтернĕ. Разведка даннăйĕсене илнĕ хыççăн, майор Горянинов ертсе пыракан часть фашистсене вăрттăн хупăрласа илнĕ те, сасартăк пеме пуçланă. Çапăçу темиçе сехет пынă. Пирĕн боецсем тăшмансен 300 автомашинине тата нимĕçсен йывăр артиллерин икĕ дивизионне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем хушшинче—юсавлă 30 автомашина, нумай лашасемпе боеприпассем, тыткăна илнĕ салтаксем пур.

* * *

Н. юханшывĕ урлă каçмалли переправа патĕнче пулса иртнĕ çапăçура старший лейтенант Страшков подразделенийĕнчи саперсем халиччен пулман героизм кăтартнă. Германи батальонĕ, юханшывăн тепĕр енне окопсем туса вырнаçнăскер, артиллери тата авиаци пулăшнипе пирĕн чаçсем çине питĕ вăйлăн персе тăнă, çав чаçсене юханшыв урлă каçса фашистсене вĕсем йышăнса тăракан позицисенчен хăваласа яма приказ панă пулнă. Командованин çак приказне пурнăçа кĕртес пулсан шурлăх урлă çул тумалла пулнă. Саперсем пиллĕк тăрăнĕш шывра ĕçленĕ. Фашистсем вĕçĕ-хĕррисĕр вăйлăн персе тăнă. Нимĕçсен уйрăм групписем юханшыв урлă каçса красноармеецсен ĕçне аркатса яма хăтланнă. Пирĕн боецсем Германин виçĕ истребительне персе антарнă тата тăватă минометне пеме чарса лартнă. Пехота пулăшнипе тăшман атакисене сире-сире ярса, саперсем çула шăп срокра туса пĕтернĕ. Пирĕн танксемпе пехота юханшыв урлă каçнă та, фашистсене çĕмĕрсе тăкнă, каялла хăваласа янă.

* * *

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ларионов командир пулса ертсе пыракан истребительсен группи белофинсен пĕр аэродромĕнче тăшмансен тăватă истребителĕ пуррине курнă. Ларионовпа Иванов летчиксем самолетсем çине темиçе бомба пăрахнă. Вĕсенчен иккĕшĕ çийĕнчех çунса кайнă, иккĕшĕ бомба ванчăкĕсемпе сиенленнĕ. Белофинсене пулăшма юнашар аэродромран 4 «Мессершмитт» вĕçсе пынă, анчах совет истребителĕсене курсан вĕсем часах каялла тарнă.

* * *

Белоруссире фашистсем тытса илнĕ районсенчен пĕринче нимĕçсем пăсăлнă аэродрома юсаса юрăхлă тунă. Старший лейтенантăн Сабашников юлташăн подразделенийĕ, оккупантсен тылĕнче кĕрешекенскер, çакăн çинчен пĕлнĕ. Сабашников юлташ подразделенийĕ çĕрле аэродрома хураллакан сторожевой отряд çине пырса тапăннă. Нимĕçсен 20 салтакне ытла вĕлернĕ, ыттисем хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна парăннă. Тыткăна парăннă салтаксем ирхине аэродрома нимĕç самолечĕсем килесси çинчен пĕлтернĕ. Сабашников юлташа хăюллă шухăш пырса кĕнĕ: самолетсемпе экипажсене ярса тытмалла. Ирхине 5 сехетре нимĕç бомбардировщикĕсен пĕрремĕш звени çĕре анса ларнă. Экипажсене пĕр пемесĕр ярса тытнă. Аэродромра фашистсен машинисене курса, тепĕр икĕ звени хăюллăнах анса ларнă. Çав звеносенчи самолетсен экипажĕсене те ярса тытнă. Сабашников юлташ подразделенийĕ 9 самолет, бензинохранилище тата боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Н-ски стрелковăй дивизин чаçĕсем противникăн моторизованнăй пысăк соединенине хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнă, 189 грузовой автомашина, 5 танк, 4 броневик, 2 самолет, 6 оруди, минометсем тата танковăй пулеметсем туртса илнĕ. Çавăн пекех тата оперативлă документсемпе пĕрле штаб автобусне, радиостанци, понтоннăй парк, мотоциклсем тата 19 автомобиль туртса илнĕ. Çапăçу вăхăтĕнче тăшманăн 100 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Янковский юлташ командир пулса ертсе пыракан зенитнăй часть пĕтĕм фронта паллă. Вăрçă вăхăтĕнче вăл фашистсен 43 бомбардировщикне персе антарнă. Янковский чаçĕнчи мухтавлă зенитчиксем тĕл персе тивретсе, вăрçă вăхăтĕнчи 4 эрне хушшинче тăшманăн çĕршер самолечĕсен çулне пӳлсе тăнă.

* * *

Грецин Самос утравне тытса илнĕ хыççăн, итальянецсем утрав çинче пурăнакан мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарнă. Магазинсене тата халăха çаратнă вăхăтра Итали салтакĕсем, фашистла мародерсене хирĕç тăнăшăн, арçынсемпе хĕрарăмсене 420 çынна вĕлернĕ, вăл шутра Турци подданнăйĕсем те пур.

Утрав çинче васкасах аэродромсем тăваççĕ, горючи склачĕсем тăва-тăва лартаççĕ тата десантлă пĕчĕк суднăсене пит нумай илсе пыраççĕ.

* * *

Чехословакири Прешов хули патĕнче Германин боеприпассем тиесе пыракан çар составĕ иртсе кайнă вăхăтра чугунçулне взрыв туса сирпĕтсе янă. Çар поездне крушени пулнă вăхăтра снарядсем тиенĕ 22 вагон пĕтнĕ. Взрыв вăхăтĕнче Германин 41 салтакĕпе 3 офицерĕ вилнĕ.

* * *

Сталин юлташа СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнине совет халăхĕ калама çук пысăк çĕкленӳпе хавхаланса кĕтсе илчĕ. Ленинградри Кировски заводăн механически цехĕнче ĕçлекен старший мастер Филимоненко юлташ, митинга пухăннă рабочисен шухăшне палăртса, çапла каланă:

«Сталин вăл—пирĕн Тăван çĕршывăн тăшманĕсемшĕн аçа-çиçĕм пек хăрушă. Сталин вăл—çĕнтерӳ. Сталин ертсе пынипе, унăн стратегиллĕ планĕ тăрăх эпир Деникина, Колчака, Врангеле аркатса тăкрăмăр, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкрăмăр. Халĕ ĕнтĕ аслă Сталин ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ хăйсен мĕнпур хăвачĕпе Гитлерăн фашистла çĕлен-калтасен пуçĕнчен пырса çапĕç». Мускаври автомобиль заводĕнчи рабочисемпе инженерсем çапла çыраççĕ: «Сталин юлташа çак ĕçе уйăрса лартни фашистла ордасене çĕмĕрсе тăкас шанчăка пирте татах та ытларах вăйлатать».

Баку хулинчи Шаумян районĕнчи площадьре митинг пулса иртнĕ, унта 3 пин ĕççынни пулнă. Сталин ячĕпе тăракан заводри цех начальникĕ орденоносец Казарян юлташ митингра нефтеперегонщиксен ячĕпе сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Граждăн вăрçин фрончĕсенче тунă историллĕ çĕнтерӳсем Сталин ячĕпе çыхăнса тăраççĕ. Социализмлă строительствăн мĕнпур çĕнтерĕвĕсем унăн ячĕпе çыхăннă. Ăçта Сталин—унта çĕнтерӳ! Пирĕн хаклă атте, тăван Сталин, ертсе кай пире çĕнтерӳллĕ çапăçăва! Çĕнтерӳ пирĕнтех пулать!»

Донбасри горняксем Сталин юлташ патне янă хăйсен çырăвĕнче çапла çыраççĕ: «Эсĕ, пирĕн юратнă атте тата çулпуç, Октябрь революцийĕпе граждăн вăрçин геройла çулĕсенчи пекех, совет халăхĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене тӳррĕмĕнех ертсе пырассине çĕнĕрен хăвăн çине илетĕн. Сана Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнине хĕрӳллĕн саламласа, эпир гитлерла-фашистла бандитсене çĕнтерессине шансах тăратпăр. Санпа пĕрле—нумай миллионлă пĕтĕм совет халăхĕ».

Хĕрарăмсен Гитлертан ытла хăрушă тăшман çук

ССР Союзĕнчи мĕнпур хĕрарăмсене, тĕнчери мĕнпур хĕрарăмсене!

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем! Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем, ача амăшĕсем, аппасемпе йăмăксем тата арăмсем!

Совет Союзĕн çулпуçĕ тата пĕтĕм этемлĕхĕн тусĕ Сталин пирĕн çĕршыври халăхсене пирĕн çĕршыв çине ултавлăн килсе тапăннă Гитлера тата унăн çарĕсене çапса аркатма чĕнсе каларĕ. Хĕрарăмсемшĕн Гитлертан ытла, фашизмран ытла хăрушă тăшман çук.

Европăри хĕрарăмсене урăх никам та мар, çав Гитлер, çав фашизм хисепсĕр нумай асаплăхсем патне пырса тăратрĕ: вăл вĕсен ывăлĕсене, упăшкисене тата пиччĕшĕсемпе шăллĕсене туртса илчĕ, хăйĕн намăссăр та юнлă ĕмĕчĕшĕн вăл вĕсене пĕтерсе пырать.

Хĕрарăмăн мĕнпур прависене урăх никам та мар, çав Гитлер, çав фашизм туртса илет, ăна этем тивĕçлĕхĕсĕр хăварать, ăна чура, килти выльăх туса хурать. Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче пурăнакан хĕрарăмсенчен гитлеровецсем хăрушла мăшкăлаççĕ: ача амăшĕсемпе упăшкаллă арăмсене вăйпах салтаксен публичнăй çурчĕсене яраççĕ, вĕлерессипе хăратса, вĕсене хуть те мĕнле фашистла офицер аллине параççĕ.

Польшăри, Францири, Грецири, Югославири, Бельгири, Норвегири ачасене урăх никам та мар, çав Гитлер, çав фашизм выçлăхпа асапланма тата вилме тăратса хăварчĕ. Гитлер ачасен ачалăхне, вĕсен амăшĕсен амăшлăхне, стариксен хăйсене тивĕçлĕ канăçне туртса илчĕ.

Анчах Гитлер пирĕн ирĕклĕхпе савăнăçа туртса илеймĕ! Фашистсем намăса пĕлмесĕр тапăнса килнине хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ таса курайманлăхпа çĕкленсе тăчĕ.

Вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех миллионшар совет ĕçхĕрарăмĕсем уй-хирсенче, предприятисенче çапăçма кайнă воинсем вырăнĕнче ĕçлеме тăчĕç. Миллионшар хĕрарăмсем командованин пĕрремĕш приказĕ хыççăнах фронта хĕрлĕ сестрасем пулса кайма хатĕр.

Хăйсен учителĕ тата тусĕ Сталин юлташ чĕннине ответлесе, совет хĕрарăмĕсем хамăр çĕнтерӳшĕн, нимрен хăраман çирĕп боевой тыл тăвассишĕн тата тимлĕрех кĕрешме тивĕçлĕ.

Хĕрарăмсем, аслă çĕршывăн граждăнкисем, ача амăшĕсем, упăшкаллă арăмсем, аппасемпе йăмăксем! Эпир пĕлетпĕр, çĕнтерӳ çăмăллăн пулмасть. Пирĕн хушăмăрта кашнин чĕри çирĕплĕхĕн иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăтăр. Пирĕн хушăмăртан кашниех, хăйĕн юратнă ывăлне, упăшкине е пиччĕшĕпе шăллĕне çапăçăва ăсатса, ăна шанчăклăх тата лăпкăлăх парса ятăр. Эпир тăшмана курайманни, тăван çĕршыва юлашки юн тумламĕ юлмиччен сыхлама шутлани вĕсемшĕн амăшĕ пиллени пултăр. Лайăх пĕлсе тăччăр вĕсем: эпир лăпкă, çивĕч тата, вĕсем çапăçусенче пулнă пекех, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пултаратпăр.

Килхуçи хĕрарăмĕсем! Сирĕн ĕçчен алăсем халь производствăра кирлĕ. Фабрикăсенче, заводсенче ĕçлеме кайăр.

Работницăсем, колхозницăсем тата служащисем! Арçынсен профессийĕсене тата шанчăклăрах вĕренĕр, станоксем, тракторсем патĕнче, культурăпа искусство участокĕсенче малти позицисене кайнисем вырăнне тата хăюллăрах тăрăр. Хамăрăн кашни хула, кашни яла, кашни киле тăшмана хăратакан çирĕп крепость туса хурăр. Хамăрăн таса вăйсене ывăлăмăрсен хаклă юнне упраса хăварас ĕçе хурăр. Пурте ăста тата ăшă кăмăллă сестрасем, сиделкăсем, донорсем пулăр.

Хĕрарăмсем, ниçта та тата пĕр самантлăха та ни паника тума, ни пуçа усма, ни хăраса ӳкме ан парăр. Пур енчен те хамăрăн шиклĕхсĕр ывăлсене, упăшкасене тата пиччĕсемпе шăллăмăрсене тивĕçлĕ пулăр. Паникерсемпе хăравçăсем çине йĕрĕнсе пăхмалла тăвăр, вĕсене трибунала парăр. Тыла хĕсĕнсе кĕнĕ шпионсемпе диверсантсене пĕр шеллемесĕр палăртса пĕтерсе пырăр. Хамăрăн тăван çĕршыва юратнипе, тăшмана курайманнипе пире Сталин юлташ тума хушнă çĕнтерӳллĕ тыла тĕреклетсе пырăр.

Эпир пĕлетпĕр, çак тĕрĕслĕхлĕ вăрçăра эпир пĕччен мар.

Фашистсем çавăрса илнĕ çĕршывсенчи хĕрарăмсем! Сире Гитлер асаплантарнине тата куççуль тăктарнине эпир тахçанах ăнланнă. Гитлерла вăрă-хурахсене пĕтерсе, эпир сирĕншĕн те, пирĕн аппасемпе туссемшĕн, каялла тавăратпăр. Татса çурнă Греци, Чехословаки, Серби, Польша, Норвеги, Франци, Голланди, Бельги хĕрарăмĕсем фашизма хирĕç пыракан таса вăрçăра малти ретсенче пуласса кĕтетпĕр эпир. Юнланнă Европăри хĕрарăмсен хаяр çиллĕллĕ сассисем гитлерла чуралăха хирĕç талккишпех протест тăвасса кĕтетпĕр эпир. Германири, Италири, Финляндири, Румынири, Венгрири ĕçхĕрарăмĕсем чи малтан хăйсен ывăлĕсемпе упăшкисем патне кайса, вĕсене пирĕн хăватлă тăван çĕршыва хирĕç пыракан вăрçă пысăк айăплă тата усăсăр пулни çинчен ăнлантарса парасса кĕтетпĕр эпир. Çак çĕршывсенчи хĕрарăмсем хăйсен упăшкисемпе ывăлĕсене хĕçпăшала вĕсене вĕлерекен Гитлера тата унăн йыткĕтĕвне хирĕç çавăрса тăраттарасса ĕненетпĕр тата кĕтетпĕр эпир.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем! Совет Союзĕнчи халăхсем пĕтĕм этемлĕх тăшманне—фашизма хирĕç вăрçаççĕ. Германи фашизмне хирĕç кĕрешме халăхсен пĕрлĕхлĕ фрончĕ чăмăртанать. ССР Союзĕпе Англи правительствисем гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен килĕшӳ турĕç. Халĕ Германин икĕ е тата ытларах фронтсем пулаççĕ. СССР хĕрарăмĕсем, Великобритани хĕрарăмĕсемпе алла-аллăн тăрса, мĕнпур халăхсен палачне тата тиранне хирĕç пыракан аслă вăрçа хутшăнса кĕрешеççĕ. Çак кĕрешĕве тĕнчери мĕнпур халăхсен хутшăнмалла.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем! Сирĕн çăлăнăç, сирĕн ачусен çăлăнăçĕ—пирĕн çĕнтерӳре. Пурте пĕрле тăрса, хамăр телейшĕн, этемлĕх тăшманне — юнлă ирсĕр Гитлера тĕп тăвассишĕн кĕрешĕр!

Чĕнсе калани айне алă пуснă:

Матвеева, Ленинградри «Красное знамя» фабрикăра ĕçленĕ работница, белофинсене хирĕç вăрçнăшăн «За боевые заслуги» медальпе наградăланăскер, халĕ фронтра хĕрлĕ сестра пулса ĕçлет. **Анна Радлова**, писательница. **А. Арефьева**, Ленинградри Дзержинский ячĕпе хисепленекен фабрикăра ĕçлекен ткачиха, фронтра çапăçакан виçĕ красноармеецăн тата связистка пулса ĕçлекен хĕрĕн амăшĕ. **Ольга Форш**, писательница-орденоносец. **А. Ерошкина**, Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе хисепленекен подшипниксем тăвакан заводра нумай станоксемпе ĕçлекенскер (упăшкипе икĕ пиччĕшĕ действующи армийче çапăçаççĕ). **Ванда Василевская** — писательница, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ. **Д. Кошелева**, Мускаври мотоциклет заводĕнчи стахановка (упăшки действующи армийче). **Анна Караваева**, писательница-орденоносец. **Галина Уланова**, РСФСР халăх артистки, Сталинла премии лауреачĕ, орденоносец. **М. Коршунова**, пĕрремĕш рангри военнăй врач, граждăн вăрçин участници, «20 лет РККА» медальпе наградăланăскер. **М. Кропачева**, учительница, РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕ. **Е. Корчагина-Александровская**, СССР халăх артистки, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, орденоносец. **О. Книппер-Чехова**, СССР халăх артистки, орденоносец. **М. Раскова**, Совет Союзĕн Геройĕ, майор. **Л. Сейфуллина**, писательница-орденоносец. **А. Копейкина**, Ленинградри 2-мĕш №-лĕ «Пролетарская победа» фабрикăри работница, белофинсемпе кĕрешнĕ вăхăтра тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн орденпа наградăланăскер, хальхи вăхăтра затяжной цехри хăйĕн упăшкин станокĕ çинче ĕçлет. **Галина Папанина**, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕн, Англири географсен королевски обществин хисеплĕ вице-президенчĕн арăмĕ. **О. Смирнова**, Мускаври радиозаводăн техникăллă контроль пайĕн начальникĕ (упăшки действующи армийче). **А. Остроумова-Лебедева**, художница. **Анна Ахматова**, писательница. **З. Троицкая**, Мускаври окружной чугунçулĕн начальникĕ, орденоносец. **В. Барсова**, РСФСР Верховный Совечĕн депутачĕ, СССР халăх артистки, Сталинла премии лауреачĕ. **К. Емельянова**, Сталин ячĕпе хисепленекен автозаводри стахановка, Моссовет депутачĕ. **А. Яблочкина**, СССР халăх артистки, Пĕтĕм Российăри театральнăй общество Совечĕн председателĕ, орденоносец. **В. Рыжова**, СССР халăх артистки, орденоносец. **Галина Стаханова**, дружинница. **В. Сазонова**, килхуçи хĕрарăмĕ пулнăскер, халĕ Мускаври Калинин ячĕпе хисепленекен фабрикăра ĕçлет, ĕçе вăрçă кунĕсенче кĕнĕ, ывăлĕ фронтра. **Прасковья Ангелина**, трактористка, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, орденоносец. **Любовь Орлова**, республикăн тава тивĕçлĕ артистки, орденоносец. **А. Григорьевская**, Ольховски МТС комбайнерĕ, пиччĕшĕ Хĕрлĕ Çарта. **В. Кетлинская**, писательница. **Мария Фоменко**, комбайнерка, УССР Верховный Совечĕн депутачĕ, орденоносец. **Мария Рамос-Бардина**, испанка, Ленинградри «Красное знамя» фабрикăра ĕçлекен работница, дружинница. **К. Клинковская**, Кораблински МТС-ри хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ, ĕççынни депутачĕсен Рязань область Совечĕн депутачĕ. **Анна Маракова**, Мускаври Фрунзе ячĕпе хисепленекен фабрикăри табельщица, производствăна вăрçă кунĕсенче ĕçлеме пынă килхуçи хĕрарăмĕ. **А. Белкина**, Киров ячĕпе хисепленекен «Динамо» заводăн контролерĕ, фронта кайнă упăшки вырăнне ĕçлеме тăнă. **Анна Тузова**, Горький облаçĕнчи Арзамас МТС комбайнерки, **Зоя Шмакова**, Горький облаçĕнчи Городецк МТС трактористки.

Хĕрлĕ Çара пулăшма— халăхăн хăватлă ополченийĕ

„Марс" колхозри митинг

Колхозниксем 136 çын халăх ополчени ретне çырăннă

ЕЛЧĔК. «Марс» колхозра колхозниксемпе колхозницăсен нумай çынлă митингĕ пулса иртнĕ. Митингра тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлама халăх ополченине тăвасси çинчен сÿтсе-явнă.

Митингра тухса калама чи малтан 65 çулхи колхозник, коммунист Валихов юлташ сăмах илет. Унăн халĕ виçĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Çак кунсенче вăл хăйĕн тепĕр ывăлне Хĕрлĕ Çар ретне ăсатма хатĕрленет.

— Эпĕ 65 çулта,—тет Валихов юлташ,—анчах манăн алăсем çирĕп, куçсем витĕр кураççĕ, сывлăх тĕреклĕ. Урса кайнă гитлеровецсене хирĕç эпĕ алла хĕçпăшал тытса çапăçма пултаратăп. Çавăнпа та эпĕ хама халăх ополченецĕсен ретне тăнă тесе шутлатăп.

Трибуна çине граждан вăрçин участникĕ, ялсовет исполком председателĕ Карифуллин юлташ, ĕлĕк хĕрлĕ партизан пулнăскер, хăпарать. Вăл çапла калать:

— Эпĕ 1918 çулта интервентсене хирĕç кĕрешнĕ. Халĕ те юнлă фашистла варварсене хирĕç хамăн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме пулатăп, халăх ополченине çырăнатăп.

Митингра 9 çын сăмах тухса каларĕç, вĕсем пурте халăх ополчени ретне çырăнчĕç. Вĕсен примерĕ тăрăх митингра пулнисенчен 136 çын халăх ополченине çырăнчĕç.

Колхоз правлени председателĕ Абдул Гаязов юлташ митинга хупнă чух çапла каларĕ:

— «Марс» колхоз—оборона крепоçĕ. Эпир кунта, тылра, колхозра ĕçлесе, фронтри çĕнтерÿшĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн колхоз хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн кирлĕ, çавна йăлтах пама пултарать. Халĕ эпир государствăна 1941 çулшăн 250 центнер тырă, 8 центнер сÿс патăмăр, сĕт-çу парса татнă, заем укçи 9000 тенкĕ пухнă, пирĕн колхозниксем алла извещени иличчен кăçалхи ялхуçалăх налогне 10.000 тенкĕ пачĕç, халĕ эпир уйхирти тырпула пуçтарса кĕме хатĕр.

Дисциплинăллă, организованно пулăр, Ленинпа Сталин парти тавра, Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕрлешсе тăрар!

Ф. МАЙКОВ.

Халăх ополченийĕн ретне

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Июлĕн 17-мĕшĕнче электростанцинче ĕçлекен рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен митингĕ пулса иртрĕ.

Митингра электростанци директорĕ Н. Уткин юлташ Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан комбинатри рабочисем Хĕрлĕ Çара пулăшма халăх ополченийĕ тума чĕнсе калани çинчен пĕлтерчĕ.

Рабочисем пĕрин хыççăн тепри тухса каласа халăх ополченийĕн ретне тăма хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ. «Эпĕ белофинсене хирĕç пынă çапăçусен участникĕ, мана халăх ополчени боецĕсен ретне çырма ыйтатăп. Хамăрăн юратнă тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăя тата, кирлех пулсан, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме пулатăп», — терĕ слесарь Туманов юлташ.

Арçынсем тата çамрăксем кăна мар, хĕрарăмсемпе ваттисем те халăх ополченийĕн ретне тăрса, фашистла тăшмансене хирĕç кĕрешме хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ. Акă охранник Кириллов юлташ сăмах илет.

— Эпĕ, — тет вăл, — граждан вăрçи вăхăтĕнче тăшмана хирĕç партизансен отрядĕнче кĕрешрĕм, çамрăках мар ĕнтĕ, 55 çул тултартăм. Анчах, хама ватă тесе алла усса ларма хал çитмест. Хамăрăн тăван çĕршыва сыхлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме хатĕр тăратăп. Мана халăх ополченийĕн ретне илме ыйтатăп.

— Эпир, хĕрарăмсем, тăван çĕршыва тимлĕн сыхлама тата тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерессишĕн арçынсемпе алла-алăн тытăнса кĕрешме пулатпăр, — терĕ Кругляк юлташ.

Ученица-контролер Устинова юлташ çапла каларĕ:

— Эпĕ çамрăк-ха, 18 çул та тултарайман, апла пулин те мана халăх ополченийĕн ретне илме ыйтатăп, производствăра тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеме, кирлех пулсан, алла винтовка тытса тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешме сăмах паратăп.

Рабочисемпе служащисен коллективĕ Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан комбинатри рабочисем чĕннине ырларĕ. Халăх ополченийĕн ретне илме ыйтса Туманов, Кириллов, Макшанцев, Егоров, Кругляк, Устинова тата ытти юлташсем те заявлени пачĕç. Электростанци коллективĕ хулари пĕтĕм ĕççыннисене халăх ополченийĕн ретне тăма чĕнет.

Т. МАЙОРОВ.

Эпĕ ватă пулсан та, тăшмана хирĕç винтовкăпа тухма хатĕр

Манăн ывăл, Инокентий, белофинсене хирĕç пынă кĕрешÿ вăхăтĕнче тăван çĕршыва тăшмантан сыхлама хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара кайрĕ. Халĕ те вăл фронтра фашистла ирсĕр бандитсене хирĕç çапăçать. Фронта кайнă чух вăл çапла каларĕ:

— Фашистла йытăсен кĕтĕвне çапса аркататпăрах. Çĕнтерÿ пирĕнте пулĕ!

Эпĕ хамăн ывăл юратнă тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнипе мухтанатăп. Эпĕ хам та 1905 çулта Япони вăрçинче пулнă, 1915 çулта Германие хирĕç вăрçнă. Халĕ эпĕ, ватă пулсан та, винтовкăпа лайăх пеме пултаратăп. Кирлĕ пулсан, алла винтовка тытса, тăшмана хирĕç тăма хатĕр.

И. КОРАНОВ.

Пăваялĕ, Вăрнар р.

Хĕрлĕ Çара кирлĕ таранах тимĕр-тăмăр парса тăрар!

Пирĕн промышленность, тыл, пĕтĕм çĕршыв фашистла бандитсене çĕмĕрес ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшса тăрать. Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă чухне «пирĕн винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кăларас пулать..» терĕ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ чĕнсе калани совет патриочĕсен чĕрисене тата ытларах хĕрÿллĕ вăйпа çĕклесе ячĕ. Пĕтĕм çĕршыв, ваттисенчен пуçласа пионерсене çитиччenех, тăшмана хирĕç хĕрÿллĕн çапăçакан Хĕрлĕ Çар валли нумайрах хурçă тата металл парас кăмăлпа çунать.

Союзутилĕн Шупашкарти межрайконторинче ĕçлекен работниксем пĕтĕм вăй-хала тимĕр-тăмăр пухас ĕçе хурса ĕçлеççĕ. Вĕсем иртнĕ икĕ квартал хушшинче çĕршыва 125 тоннăна яхăн тимĕр-тăмăр пухса панă. Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнса кĕнĕ хыççăн, тимĕр-тăмăр хатĕрлесси темиçе хут ÿснĕ, июлĕн малтанхи çурийĕнче вĕсем 56 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухса панă.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕçе комсомолецсем тата пионерсем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ шкулта вĕренекен пионерсем, вожатăй Слепнева ертсе пынипе, кĕске вăхăтрах 2 тонна ытла хура металл пухнă. Çавăн пекех, иккĕмĕшпе çиччĕмĕш номерлĕ шкулсенчи пионерсем те пĕрер тонна ытла тимĕр-тăмăр пухса межрайконторăн базине леçсе панă. Пионерсем, хăйсен вăйĕпе пухса панă тимĕр-тăмăршăн илмелли укçа-тенкĕне пĕтĕмпех тăван çĕршыв оборонине тĕреклетме панă.

Пирĕн ресурссем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай, вĕсемпе пирĕн туллин усă курас пулать. Пĕр заводпа предприятинче те, пĕр машинно-тракторнăй станцинче те тата колхозра та ĕçе юрăхсăр тимĕр-тăмăрсене усăсăр выртарма юрамасть, вĕсене пухса çĕршыв оборонине тĕреклетнĕ çĕре парас пулать. Ĕççыннисем пухса панă кашни тонна тимĕр-тăмăр юнлă фашизма çапса çĕмĕрме пулăшать.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Уборкăра кирлĕ машинăсене юсаççĕ

ТĂВАЙ. Колхозсем килес уборкăна хастарлăн хатĕрленеççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан тата «Красная Чувашия» колхозсем тырпула пухса кĕме кирлĕ ялхуçалăх машинисене тата транспорта юсаса çитернĕ. Районра паянхи куна 40 косилка, 52 жнейка, 75 веялка, 22 молотилка юсанă. Юсас плана 70 процент ытла пурнăçланă. Çĕнĕрен 125 рыдван туса хатĕрленĕ.

Действующи арми. Вĕçеве хатĕрленни. **Укерчĕк çинче:** бомбăсене самолет çине тиеççĕ. Л. Великжанин фото-ÿкерчĕкĕ. (ТАСС).

Çамрăксене тракторпа тата ытти машинăсемпе çÿреме вĕрентессишĕн

Сĕнтĕрвăрринчи ачасен техникăллă станцийĕ ялхуçалăх машинисене тата двигательсене вĕренес енĕпе нумайранпа ĕçлет. Кунта ялхуçалăх машинисен моделĕсене туса, вĕсене пайăн-пайăн салатма тата пухса хатĕрлеме хăнăхаççĕ. Çакăн хыççăн машинăсене вĕренме тытăнаççĕ.

1938 çулта вĕсем, пăрахăçа тухнă трактор тупса, ăна кружок членĕсен вăйĕпе юсаса майлаштарнă. Ачасем трактора питех те юратнă тата унăн пайĕсене çине тăрса вĕренме тытăннă. Юрий Плотниковпа Владимир Зотов юлташсем тракторпа никамран малтан çÿреме хăнăхса çитеççĕ, хăйсен юлташĕсене те çак специальноçа вĕренме пулăшаççĕ. Çамрăк трактористсен йышĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Арçын ачасем кăна мар, хĕрачасем те тракторпа çÿреме хăнăхса çитеççĕ.

Çак ачасем хальхи вăхăтра трактор çине ларса, обществăллă усăллă ĕçсем тума нумай пулăшаççĕ.

«Совет Союзĕнче çамрăк трактористсен кружокне чи малтан организацилленĕшĕн тата ялхуçалăх выставкинче ялхуçалăх машинисен моделĕсене кăтартнăшăн, Чăваш республикинчи Сĕнтĕрвăрринчи ачасен техникăллă станцине II степеньлĕ диплом памалла тăвас тата 5 пин тенкĕ укçа, мотоцикл парса парнелес».

Çакăн пек çырнă 1940 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕн Председателĕ Бенедиктов юлташ.

Çак хаклă парне ачасен хаваслăхне татах çĕкленĕ. Вĕсем татах та лайăхрах ĕçлеме тытăннă, хăйсен опытне ачасен ытти вырăнсенчи техникăллă станцийĕсене парса пынă. Пур çĕрте те çамрăк трактористсен кружокĕсене организацилеме тытăннă.

Кружоксенче тăракан ачасенчен чылайĕшĕ трактор, мотоциклет, автомобиль чăçĕсене лайăх пĕлеççĕ. Çĕрпÿри ачасен техникăллă станцийĕн трактор кружокĕн руководителĕ 10-мĕш класра вĕренекен Марс Иванов трактора, автомобиле тата «Червонный прогресс» двигателе лайăх пĕлет. Вăл халĕ, каникул вăхăтĕнче, Çĕрпÿри инкубатор станцийĕнче машинист пулса ĕçлеме тытăннă.

Чылай ачасем халь уйрăм трактористсем, шоферсем, комбайнерсем, механиксем патĕнче пулса тĕрлĕ машинăсене вĕренеççĕ. Хударти вăтам шкулта 10-мĕш класра вĕренекен Анатолий Васильев, 8-мĕш класра вĕренекен Геннадий Таньков (çамрăк трактористсемпе шоферсем), Канашри чугунçул çинчи 13-мĕш номерлĕ вăтам шкулра 7-мĕш класра вĕренекен Юрий Андреевпа Юрий Бобров, Канашри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулра 9-мĕш класра вĕренекенсем Коля Греков (шоферсем), Янгăлчри вăтам шкулра 6-мĕш класра вĕренекен Валерий Павлов тата Канаш районĕнчи Мăкăрти туллимар вăтам шкулра 7-мĕш класра вĕренекен çамрăк комбайнер Коля Якимов çак йĕркепе вĕренсе усăллă пĕлÿ илнĕ. Вĕсем пурте Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх Выставкин участникĕсем.

Ÿссе çитнĕ тата опытлă трактористсем, шоферсем, комбайнерсем, механиксем тăван çĕршыва сыхлама кайнă вăхăтра ачасен машинăсене вĕренес шухăш-кăмăлĕ татах та ÿсрĕ. Çак кăçалхи условире ачасен паха пуçарăвĕсене пур майсемпе те çĕклесе пымалла. Курссем, кружоксем, семинарсем организацилесе, ÿссе пыракан ăрăва машинăсене вĕренме пулăшмалла.

Пире трактористсем, комбайнерсем, механиксем, мотоциклистсем, çĕнĕ станоксем çинче ĕçлекен стахановецсем питех те нумай кирлĕ. Пĕчĕкренех мотора юратма тата унпа ĕçлеме вĕреннĕ ачасенчен яланах отлично ĕçлекен трактористсем, комбайнерсем, танкистсем, летчиксем, инженерсем, конструкторсем кĕтме пулать. Çакна шута илсе, ачасене хальхи вăйлă техникăна вĕренме пулăшмалла.

Н. НИКИТИН.

Пурте тăван çĕршыв оборони валли

Германин юнлă фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăннине хирĕç ответлесе çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисем хамăрăн çĕршыв оборонине тĕреклетме тăрăшаççĕ.

Чкаловски районĕ колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем укçи пухмалли виççĕмĕш квартал планне июль уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнчех 107,7 процент тултарчĕ. Çак вăхăт тĕлнех заем çырăннă колхозниксем подписка укçине 90 процент тÿлесе татнă. Заем укçи пухасси ытти районсенче те ăнăçлăн пырать. Елчĕк районĕ колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заем укçи пухмалли виççĕмĕш квартал планне 81,3 процент, Шăхасан районĕ 57,9 процент, Комсомольски районĕ 54,3 процент, Вăрмар районĕ 69,7 процент, Йĕпреç 47 процент тултарнă.

Кашни совет гражданинĕ, заем укçине срокран маларах тÿлесе, тăван çĕршыв оборонине тĕреклетме тăрăшать. Финанс органĕсемпе перекет кассисенче тата вырăнти советсенче ĕçлекен работниксен паянхи задачи вăл — малта пыракан колхозниксен патриотла движенине активлăн пулăшасси, вĕсен ĕçне пур çĕрте те анлăн сарса пырасси пулать.

Ф. МИРОНОВ.

Заем укçине парса татнă

ШАХАСАН. Анташ ялсоветĕнчи «Соревнование» колхоз членĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине 100 проценчĕпех парса татрĕç. «Ямурза» колхоз членĕсем те çĕнĕ заем укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ.

И. АРТИЗАНОВ.

ЕЛЧĔК. Юнлă фашистсем пирĕн тăван çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнине ответлесе, «Ново-Чурино» колхоз членĕсем ĕçре пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ, мĕн вăй çитнĕ таранах Хĕрлĕ Çара пулăшу параççĕ. Колхозниксем кăçал Виççĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне иртнĕ çулхинчен темиçе хут ытларах çырăнса илчĕç. Подписка укçине те срокчченех парса татрĕç. Колхозра çăмарта, çăм, сĕт-çу парасси та аван пырать.

С. АРЛАНОВ.

СЛАВЯН ХАЛĂХĔСЕНЕ ГИТЛЕР МĔН СУНАТЬ

Гитлерла фашизм—этемлĕхе курайманлăх пулса тăрать. Этемлĕхĕн Германире пуçпулса тăракан, юншăн антăхса ухмаха ернĕ Гитлер шайккинчен ытларах усал тăшман урăх çук та. Тĕнчене «аслă» тата «кĕçĕн» расăсем, господасемпе чурасем çине пайланса тăнă пек кăтартакан Гитлерăн вăрă-хурахла идеологийĕнчен ытларах ирсĕр тата йĕрĕнчĕк япала урăх çук та. «Аслă раса» вăл—таса юнлă Прусси юнкерĕсем, «кĕçĕн раса»—ытти мĕнпур халăхсем, ытти народноçсемпе национальноçсем. Господасем — вĕсем Гитлер, Геринг, Геббельс тата вĕсен компанийĕ хыççăн суккăррăн пыракан коричневăй шакалсен сахал йышлă пĕчĕк ушкăнĕ, чурасем вара—гитлерла Германия хĕçпăшал, ултав, чеелĕх тата сĕмсĕрлĕх вăйĕпе пăхăнтарнă мĕнпур халăхсем.

Хăйĕн çывăх çынĕсене Гитлер цинизмла уççăнах çапла каланă: «Эпир варварсем тата эпир варварсем пуласшăн та. Вăл—хисеплĕ ят... Хальхи тĕнче пĕтесси патне пырать. Пирĕн пĕртен пĕр задача—çак тĕнчене ишĕлтерсе пырасси пулать». Гитлер тĕнчене ишĕлтерес тата германски расăна кĕмен халăхсене чурасем туса хурас шухăша сарнă. «Пирĕн пĕртанлăхшăн мар, пуçпулса тăрассишĕн кĕрешмелле»,—йытăлла вĕрнĕ Гитлер. Юншăн антăхакан çак ирсĕр германец мар халăхсене пурне те «ют нацисем» тенĕ. Вĕсен шăпи—чуралăх. Гитлер шучĕпе, «тĕнчене хăратса çеç тытса пыма пулать... Массăсем чĕтресе тăмалла... Террор — чи хăватлă политикăллă оруди». Хăратса пĕтернĕ, террорпа пусарнă массăсене—чурасене, гитлерла кликăн программи тăрăх, Пруссири «çĕнĕ дворянсен» ăрăвĕ «тимĕр алăпа» тытса тăмалла пулать. Çĕрĕç министрĕ Дарре нихăçан илтмен цинизмпа çапла каланă: «Эпир ăратлă ăйăрсемпе кĕсресене суйласа пырса, Ганновер лашине çĕнĕрен чĕртсе çитĕнтернĕ пекех, темиçе ăру тăршшĕпе обязательнăй йĕркепе хĕреслентерсе пырса, çурçĕрти германецăн таса сăнарне те çĕнĕрен чĕртетпĕр», тенĕ. Çакă пулать те ĕнтĕ «ют раса» çыннисене—«тарçă-чурасене» ертсе пыракан «çĕнĕ дворянствăна тăвасси».

Гитлер мĕнпур славян халăхĕсем çине вĕçĕмсĕр усал курайманлăхпа пăхнă тата пăхать те. Гитлер славянсем çинчен мĕн каланине пĕтĕм ăшчикпе чĕтремесĕр тата йĕрĕнмесĕр пăхма çук. Çак ирсĕр этем шучĕпе, мĕнпур расăсем хушшинче чи «кĕçĕнни» — славянсем пулаççĕ. Гитлера Австри те «славянланнă» çĕршыв пек туйăннă. «Вена текех нимĕç хули мар. Унта славянсемпе хутăшса пулнă метиссем çеç. Этем евĕрлĕ чипер нимĕç çук. Çав йăх-яха лÿчĕркесе пăрахмалла». Гитлер вара чăнах та Австри халăхне питĕ хаяррăн лÿчĕркенĕ тата лÿчĕркет те.

Австриецсем, «славянсен метисĕсем»—«йăх-ях» пулсан тата вĕсене лÿчĕркесе хумалла пулсан, Гитлер «таса» славянсем çине мĕнле пăхассине тавçăрса илме питех те çăмăл. Вăл—темле шухăшласа та илмелле мар тискер тата хăрушă япала. Ирсĕр Гитлер калать: «Нимĕçсем—раса, славянсем — чурасен масси. Господасен иерархийĕн чурасен массине чуралантарас пулать». Европăра славян халăхĕсен нумай миллионлă масси пурăннине кура тарăхнипе урсах кайса, Гитлер çакăн пек вывод тăвать: славянсене пĕтерсе пымалла, славянсен государствисенче славянсем çуралассине чакарма тăрăшмалла. «Славянсем çуралса пырассине пур майсемпе те чарса лартмалла». Анчах «чи аслă тĕллев — славянсен массисене пĕтересси пулать». Славянсем—ют халăх, çавăнпа та, тет Гитлер, «пирĕн умма ют халăха йышсăрлатас тата çав хушăрах Германи халăхĕн хисепне ÿсме вĕçĕмех пулăшас тивĕçлĕх тухса тăрать. Ют халăх йышне сахаллатмалли техникăна хатĕрлес пулать». Çак, юншăн хыпса çунакан, йĕрĕнчĕк гитлерла банда славян халăхĕсене сахаллатмалли техникăна хатĕрлесе те хунă. Ирсĕр техника! Гитлер каланисем тăрăх,—вăл çакăн пек курăнать: «Шыв пек юхма пуçлакан хаклă юншăн нимĕн чухлĕ те пăшăрханмасăр, эпĕ Германи халăхĕн чечекне пулас вăрçăн çил-тăвăлне кĕртсе янă вăхăтра манăн хурт-кăпшанкăсем пекех ĕрчекен кĕçĕн раса çыннисене миллионĕ-миллионĕпе вĕлерес правăна хирĕç кам тавлашса тăма пултарĕ? Эпĕ вĕсене пĕтермĕп, вĕсен йышĕ ÿсессине çеç пĕрмаях чарса пырăп,—сăмахран, арçынсене нумай çулсем хушши хĕрарăмсенчен уйрăм тытнипе».

Садист Гитлерăн арсеналĕнче славянсене пĕтерсе тăкма сахал мар «техникăллă» майсем пур. Гитлеровецсем çавăрса илнĕ славян халăхĕсем вĕсен мĕнпур хăрушлăхĕсене, тискерлĕхĕсене тата йывăр тĕлĕкри пек асапĕсене тÿссе курчĕç ĕнтĕ тата халĕ те тÿсеççĕ. Гитлер çавăрса илнĕ вырăнсенче пурăнакан чехсене, славянсене, поляксене, русинсене, украинецсене, белоруссене чурасем пек пурăнасси патне çитерсе тăратнă. Миллионшар славянсене тискеррĕн вĕлернĕ. Фашистла варварсем, ашшĕ-амăшĕсен куçĕ умĕнчех, пачах айăпсăр ачасене пĕр хĕрхенмесĕр вĕлереççĕ. Çынсене асаплантарма садистсем чи хăрушă, тискер майсемпе усă кураççĕ. Арăмсенчен, хĕрачасенчен, ача амăшĕсенчен, аппăшĕсенчен мăшкăллани, хĕрарăмсен кăкăрĕсене каса-каса илни—мĕн пулма пултартăр ĕнтĕ çавăнтан ытла хăрушши? Тыткăна лекнĕ красноармеецсене тата Гитлер çавăрса илнĕ районсенчен тухса тарма ĕлкĕреймен çынсене ахаль кăна вĕлермеççĕ, вĕсене малтан темĕн чухлĕ асаплантараççĕ, сусăртса пĕтереççĕ. Вĕри шыв сапса пĕçертнисем, куçсене чиксе шăтарнисем, алăсемпе урасене татса илнисем т. ыт. те—акă мĕнле тискерлĕхсемпе усă кураççĕ вĕсем.

Нимĕçсен фашистла правителĕсем чура туса хунă поляксемпе чехсене пĕтерсе пыраççĕ. Чĕрĕ юлнисенчен мĕнпур правăсене туртса илнĕ, вĕсен этем тивĕçлĕхне пылчăк ăшне таптаса чикнĕ. Чех халăхне вăйпах нимĕçлентереççĕ, унăн тăван чĕлхине, шкулĕсене, культурине, йăлисене туртса илеççĕ. Гитлер чехсене Европăран пачах хăваласа кăларса.. Çĕпĕре яма шутлать.

Словакия «никама пăхăнман» государство шутланать, анчах çапла калани вăл куçăнах мăшкăллани çеç пулать. Словаксен кунçулĕ поляксемпе чехсен шăпи патнех çывхарать. Словак халăхĕ Словакире хăйĕн ирĕкĕпе ĕçлесе пурăнма пултараймасть, ăна Гитлер бандичĕсем хăйсене кирлĕ пек тыткалаççĕ. Фашистла ордасем тĕшĕрсе кĕнĕренпе Балканри славянсен—болгарсен положенийĕ те çулте асăннă халăхсен пурнăçĕнчен нимĕн чухлĕ те уйрăм мар пулса тăчĕ. Словаксемпе, чехсемпе тата поляксемпе танах, халĕ болгар халăхне те ĕнтĕ «кĕçĕн раса» картне антарса лартнă.

Югославине йăлтах аркатса тăкнă, путарнă, вăй-халне сăхса кăларнă. Çĕршыва концентрациллĕ лагерь туса хунă. Пур çĕрте те виселицăсем.

Варварла, хаяррăн тата изуверла хытă тыткалать юнлă Гитлер славян халăхĕсене.

Анчах славян халăхĕсем хушшинче пĕтĕмĕшпех пуç пулса тăмашкăн, вырăссене çĕнтерес пулать, пĕтĕм Совет Союзне чура тăвас пулать. Гитлер вăрçă пуçларĕ. Хăйĕн юнлă тĕлĕкĕсенче Гитлер Польшăна, Венгрие, Сербие, Хорватие, Румыние, Украинăна, «вырăссен кăнтăрти темиçе облаçĕсемпе государствисене тата çавăн пекех Кавказри государствăсене» кĕртсе тунă «федеративлă Германи империйĕ» çинчен сĕмленет. Мĕнлескер-ха вăл, çав пулас федераци? «Вăл, ним иккĕленмесĕр, федераци пулать,—тет намăссăр Гитлер,—анчах унăн членĕсем, паллах, нимĕçсемпе пĕр пек правăллă пулмаççĕ. Çарсăр тăракан, уйрăм политика тытса пыман, хăйсен экономикине тытман иккĕмĕш картри халăхсен союзĕ—акă мĕн пулать ĕнтĕ вăл федераци».

Гитлерăн выçă куçĕсем хĕвелтухăç еннелле тĕллеççĕ. Вăрă-хурахла ĕçсем тумалли фашистла политикăн никĕсне хывса, хăйĕн этеме курайманлăхлă «Манăн кĕрешÿ» ятлă кĕнекинче Гитлер çапла çырнă: «Европăра çĕнĕ çĕрсем тупма шут тытсан, эпир вĕсене пĕтĕмĕшпе илсен Россия шучĕпе çеç тупма пултарăттăмăр. Ун чухне пирĕн, пилĕксене çĕнĕрен хытарса çыхса, тахçан авал пирĕн орденсен рыцарĕсем кайнă çулпала шума тытăнмалла пулĕччĕ... Европăра çĕнĕ çĕрсем çĕнсе илесси çинчен калаçнă чух эпир, паллах, чи малтан Российăна тата ун тавра ăна пăхăнса тăракан государствăсене çеç асра тытма пултаратпăр». Гитлерпа унăн лакейĕсем «хĕвелтухăçĕнчи çĕрсемпе» усă курма план та туса хунă.

Çав хăрушла план çакăн пек курăнать. «Славянсен вак хресченĕсене каллех çĕртен уйăрасси тата, вĕсем çĕнĕрен çуралса йышланассине чакармашкăн, вĕсене çĕрсĕр пролетарисем тăвасси çинчен сăмах пырать. Ĕçлесе усă куракан çĕрсене Германири господасен класĕн аллине куçмалла тăвас пулать. Хĕвелтухăçĕнчи пĕтĕм пространствăра шултра именисен хуçисем пулма нимĕçсен çеç тивĕç пур. Ют раса пурăнакан çĕршыв чурасен çĕршывĕ, ялхуçалăхĕнчи батраксен е промышленноçри рабочисен çĕршывĕ пулса тăмалла... Хальхи крепостла пăхăнăвăн е чуралăхăн тивĕçлĕ формине тумасăр, этем культурине аталантарма çук». Германири господасем—крепостниксем «сахал ăс-тăнлă», анчах ун вырăнне «шăмшак тата политика тĕлĕшĕнчен лайăх çирĕпленнĕ» «çĕнĕ аристократи» пулса тăмалла.

Анчах ку пурте мар-ха. «Вĕçĕмсĕр тĕттĕмлĕхпе язычество патне тавăрăнма хăюллăх çитерес пулать. Культура тата пĕлÿсем господасен класĕшĕн питех те паллă хăрушлăх пулса тăраççĕ. Анчах культура патне ирĕклĕн пыма май пани чурасен класне хăварас ĕçшĕн пушшех те хăрушă. Пурте илме пултаран культура идеалĕ хăйĕн ĕмĕрне тахçанах ирттерсе янă. Пĕлÿсемпе наукăн каллех çÿлте тăраканнисем çеç илме пултаракан вăрттăн культура характерне йышăнмалла».

Акă мĕн сунать Гитлер вырăс халăхне тата мĕнпур славян халăхĕсене: вĕçĕмсĕр чуралăх, тĕттĕмлĕх, этемрен Германири господасен çĕнĕ класĕн саламачĕ айĕнче пĕр сас-чĕвсĕр ĕçлекен ĕлĕк-авалхи дикарь туса хурасси.

Вăл пулас çук. Çынçиенсен программине хирĕç мĕнпур славянсем: вырăссем, поляксем, украинецсем, белоруссем, сербсем, чехсем, словаксем, болгарсем çеç мар кĕрешеççĕ тата кĕрешĕç. Фашистла господасен идеологийĕ тĕнчери мĕнпур халăхсемшĕн ют. Ытти халăхсем пулăшнипе совет халăхĕ фашистла господасене — çынçиенсене тĕппипех пĕтерсе хурĕ.

В. КРУЖКОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

(Июлӗн 21-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерў)

Ыран июлӗн 21-мӗш тенӗ чух ҫӗрле Полоцк-Невель, Смоленск тата Новоград-Волынски енӗсенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса пынӑ. Фронтӑн ытти енӗсемпе участокӗсенче пысӑк ҫапӑҫусемех пулман.

Июлӗн 20-мӗшӗнче пирӗн авиаци противникӑн 31 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ, пирӗн 6 самолет пӗтнӗ.

* * *

Виҫӗ орден илнӗ капитан Поляков ертсе пыракан истребительсен группи тӑшман аэродромӗ патне ҫывхарса пынӑ, ҫав вӑхӑтра фашистсен пӗр самолечӗ ҫӗр ҫине анса ларма хатӗрленнӗ пулнӑ. Летчик Решетников тӑшман машинине ҫӗр ҫине анса ларма паман, пулеметран персе ӑна ҫӗр ҫине ўкернӗ. Ҫав вӑхӑтра летчик Дубовик белофинсен аэродром ҫинчи самолетне персе шӑтарса пӗтернӗ. Тӑшман машини ҫавӑнтах ҫунма пуҫланӑ. Поляков, Баранов тата Калиниченко летчиксем тӑшманӑн вӑрманта пытанса тӑракан 5 самолечӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Задание отлично пурнӑҫа кӗртсе, совет летчикӗсем пурте хӑйсен аэродромне таврӑннӑ.

* * *

Германи ҫарӗн ҫынсем тӗлӗшпе те тата материальнӑй чаҫсем тӗлӗшпе те пысӑк ҫухатусем пулаҫҫӗ. 27-мӗш дивизин 311-мӗш пехотнӑй полкӗн тыткӑна лекнӗ унтер-офицерӗсем Франк Кляйн тата Рудольф Янсен ҫапла каласа параҫҫӗ: вӑрҫӑ пуҫламӗшӗнче 311-мӗш полкри кашни ротӑра 170-шер салтак, 9 бронемашина тата 24 мотоцикл пулнӑ. Ҫав полкӑн ротисенче халӗ мӗнпурӗ те 15—20-шер салтак, 2—3 бронемашина ҫеҫ тӑрса юлнӑ.

* * *

П. местечко патӗнчи ҫапӑҫура нимӗҫсен темиҫе танкӗпе мотопехоти пирӗн Н-ски стрелковӑй полк вырнаҫса тӑнӑ вырӑна кӗрсе кайнӑ. Тӑшманӑн ҫак чаҫне пӗтерсе тӑкнӑ, унтан разведка ҫул тӑрӑх танксен пысӑк колоннипе пехота пыни ҫинчен пӗлтернӗ. Полк контратака тунӑ, пехотӑна танксенчен уйӑрса илнӗ те пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Балти флочӗн пӗр эскадрильи летчикӗсем — старший лейтенант Митич тата лейтенант Козлов, противник аэродромне ӑнӑҫлӑн атакӑласа, унта тӑшманӑн 7 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Варна (Болгария) портӗнчен инҫех мар вырӑнта Болгари эсминецӗ Германин подводнӑй лодки ҫине пырса тӑрӑннӑ. Подводнӑй лодка шыва путнӑ. Унӑн экипажӗ пӗтнӗ.

* * *

Оккупациленӗ Францире, Германин ҫар влаҫӗсем хӗсӗрленине пӑхмасӑр, ҫар поезчӗсене рельсӑран кӑларса янисем, ҫар склачӗсене вут тӗртсе ҫунтарнисем, нимӗҫсен офицерӗсемпе салтакӗсем ҫухални час-часах пулаҫҫӗ.

Чугунҫулсем ҫинче крушенисем пулни ўссе пынӑ пирки хӑраса ўкнӗ влаҫсем айӑплисене шыраса тупма ӑнӑҫсӑрах хӑтланаҫҫӗ.

Ҫар ҫыннисемпе вӑрҫӑ материалӗсем тиенӗ пӗр питех те кирлӗ эшелона крушени туса пӗтерсе тӑкнӑ, ҫакӑн чухне Германи ҫарӗн нумай салтакӗсем тата 8 офицерӗ вилнӗ. Ҫак крушение тӑвакансене кӑтартса паракан ҫынна Парижри полици префекчӗ 20.000 франк пама пулнӑ.

* * *

Совет Союзӗнчи хуласемпе ялсенчен Сталин юлташа СССР Оборона Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартнине саламласа ӗҫҫыннисем ҫаплах ҫырусем ҫыраҫҫӗ. Мускаври «Серп и молот» заводри прокат цехӗн мастерӗ Ульянов юлташ митингра ҫапла каланӑ: «Пирӗн ҫӗршыври тата пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисем пирӗн тӑван, большевикла парти, пирӗн ҫулпуҫ тата тус Сталин юлташ ҫине шанса пӑхаҫҫӗ. Ҫӗршыв оборони Сталинӑн шанчӑклӑ аллисенче пулнине эпир пӗлсе тӑратпӑр. Пирӗн вӑй тата фашистла варварсене ҫӗмӗрсе тӑкас кӑмӑл сехетсеренех ўссе пырать». Ҫакӑ вӑл — этемлӗхӗн чи тискер тӑшманне, Гитлерла бандӑна хирӗҫ кӗрешме ҫӗкленнӗ мӗнпур совет ҫыннисен сасси, тӗнчери малта пыракан ҫынсен сасси пулса тӑрать. «Парижская Коммуна» фабрикин, «Красная роза» комбинатӑн, «Серп и молот» заводӑн, Л. М. Каганович ячӗпе тӑракан тормозной заводӑн, Киров ячӗпе тӑракан «Динамо» заводӑн, Ленинградри Сталин ячӗпе тӑракан заводӑн, «Большевик» заводӑн, «Сталинуголь» тресчӗн 1-мӗш №-лӗ шахтин тата «Рутченковуголь» тресчӗн 39-мӗш №-лӗ шахтин, «Орджоникидзенефть» тата «Сталиннефть» тресчӗсен нефть кӑларакан промыслисен тата ытти заводсемпе фабрикӑсен коллективӗсем хӑйсем йышӑннӑ резолюцисенче вӗсем фашизма ҫӗнтерме Хӗрлӗ Ҫара мӗн кирлине пурне те пама хатӗр тӑни ҫинчен калаҫҫӗ.

* * *

Гитлерла Германие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен ССР Союзӗпе Чехословаки хушшинче тунӑ килӗшӗве Совет ҫӗршывӗнчи рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем пӗр кӑмӑллӑ пулса ырлаҫҫӗ. Киеври машинӑсем тӑвакан «Большевик» заводри работниксен группи ҫапла ҫырать: «Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн пыракан вӑрҫӑ Европӑри тата Америкӑри мӗнпур халӑхсем хӑйсем никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн кӗрешнипе пӗрлешсе кайӗ тесе, Сталин юлташ каланӑ сӑмахсене ҫак килӗшў ҫирӗплетсе парать. Пирӗн вӑйсем сехетсерен ўссе пыраҫҫӗ». Украина ССР Верховный Совечӗн депутачӗ академик Д. Н. Синцов, государствӑн Харьковри университечӗн профессорӗ академик Л. А. Булаховский, Шевченко ячӗпе тӑракан театрӑн художествӑллӑ руководителӗ, УССР халӑх артисчӗ М. М. Крушельницкий, Харьковри медицина обществин председателӗ, наукӑн тава тивӗҫлӗ деятелӗ В. М. Коган-Ясный, искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Н. Г. Бурачок ҫапла ҫыраҫҫӗ: «Эпир, Советлӑ Украинӑри наука, культура тата искусствӑсен деятелӗсем, ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсен вӑйне, ирӗкне тата ӗмӗчӗсене пӗрлештерекен Сталинла ӑслӑ политикӑна хӗрўллӗн саламлатпӑр. Эпир Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствипе Чехословаки республикин правительстви хушшинче тунӑ килӗшӗве ырлатпӑр тата ҫакна шанса тӑратпӑр: ирӗклӗхе юратакан тата вӑрҫӑра паттӑррӑн ҫапӑҫакан чехословаксен примерне ытти халӑхсем — славянсен аслӑ ҫемьин членӗсем те тата малта пыракан мӗнпур этемлӗх йышӑнса илӗ». Алма-Атари атӑ-пушмак тӑвакан фабрикӑри рабочисемпе служащисен митингӗнче тухса каласа, стахановец Аршибаев юлташ ҫапла каланӑ: «Эпир пӗтӗм чун-чӗрепе Чехословакин ирӗклӗхе юратакан халӑхӗшӗн тӑратпӑр. Совет халӑхӗ чехословаксене Гитлер пусмӑрӗнчен хӑтӑлма пулӑшӗ». Мускаври «Каучук» заводри коллективӑн шухӑшне 1-мӗш №-лӗ цехри рабочи Бардошин юлташ каласа панӑ: «Гитлерла ҫаткӑнсене хирӗҫ, ирӗклӗхшӗн, хӑйсен чыслӑхӗшӗн тата никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн кӗрешекен халӑхсен пӗрлӗх фрончӗ ытларах та ытларах сарӑлса тата тӗрекленсе пырать. ССР Союзӗнчи, Англири, Чехословакири тата ытти ҫӗршывсенчи халӑхсен вӑйне пӗрлештерсе пӗтӗҫтерни — фашистла ҫынҫиенсене часах тата пӗтӗмӗшпех ҫӗмӗрсе тӑкассин гарантийӗ пулса тӑрать».

Снайперсен взвочӗ ҫапӑҫура

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Чӑнкӑ сӑрт ҫинчен аялалла ҫул анать, ҫул хӗррипе тўррех ҫӑра вӑрман пуҫланать. Лӑпкӑ. Сайра-хутра ҫеҫ кайӑксен сасси илтӗнет. Сасартӑк ҫул тӗлӗнче фашистсен самолечӗ аялтан хӑвӑрт вӗҫсе иртет. Темиҫе километр вӗҫсе кайнӑ хыҫҫӑн вӑл каялла вӗҫсе килет, фашистсен разведчикӗ нимӗн те тупаймасть, вӗҫсе каять. Каллех лӑпкӑ.

Анчах таврари лӑпкӑлӑх ултавлӑ. Лейтенант Топоров ертсе пыракан снайперсен взвочӗ йывӑҫсем хушшинче пысӑк ӑсталӑхпа чеен пытанса вырнаҫнӑ. Боецсен пысӑк мар группи умӗнче—подкреплени пырса ҫитиччен тӑшмансем куҫса пырассине чарса тӑрас задача.

Темиҫе минута иртет. Ҫул иртсе пыракан сӑрт айлӑмӗнче нимӗҫсен пысӑк отрячӗ килсе тухать. Атӑсем хыттӑн пусса утни илтӗнет. Тӑшмана сӑрт айлӑмӗн варрине анса ҫитме май параҫҫӗ, унтан лейтенант Топоров автоматран пеме тытӑнать. Ку—сигнал. Фашистсем ҫинче аҫа-ҫиҫӗм ҫиҫсе тӑма тытӑнать.

Салтаксемпе офицерсем каялла тараҫҫӗ. Сӑрт айлӑмӗнче фашистсен ҫӗр вилене яхӑн выртса юлать.

Пӑртак тӑхтаса тӑраҫҫӗ. Лейтенант Топоров ҫав вӑхӑтпа усӑ курать. Вӑл хӑйӗн боецӗсене вӑрман хӗррипе ҫӗнӗ позицисене вырнаҫтарса тухать. Халӗ ӗнтӗ снайперсем яла ҫитичченех пӗтӗм уй ҫине персе тӑма пултараҫҫӗ. Тӑшман уй варрине окоп чавса выртать, фашистсем вунӑ станковой пулеметран вӑрман ҫине персе тӑраҫҫӗ.

Лейтенант Топоров мана тата Голованя снайпера фашистсен персе тӑракан вырӑнӗсене сӑнаса тӗрӗслеме хушать.

Хамӑрпа пӗрле виҫшер граната илтӗмӗр те, эпир хырӑмпа малалла шума тытӑнтӑмӑр.

Тӑшманӑн пулемечӗсем хӑш вырӑнтине пӗлнӗ хыҫҫӑн, эпир уйӑрӑлса кайрӑмӑр. Кашниех тӑшманӑн персе тӑракан вырӑнӗ патнелле малалла шуса пыратпӑр. Пӗр 5 минута иртнӗ хыҫҫӑн эпӗ хамран 12 метрта икӗ фашиста куртӑм. Вӗсем, пытанса выртнӑскерсем, пирӗн сылтӑм фланг ҫине пулеметран переҫҫӗ. Гранатӑна хатӗрлерӗм, ҫав вӑхӑтрах айккинче пӗр граната ҫурӑлса кайни илтӗнчӗ, унтан тепре. Снайпер Головань тӑшманӑн персе тӑракан вырӑнне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ пулнӑ. Ҫав вӑхӑтрах эпӗ те хамӑн гранатӑна ывӑтрӑм, фашистсен пулемечӗ чарӑнса ларчӗ.

Эпир ҫавӑн пек ултавлӑн кӗрсе кайни фашистсене тарӑхтарчӗ. Противник пӗтӗмпех Голованьпе ман ҫине пеме тытӑнчӗ.

Лейтенант Топоров каллех ҫакӑнпа усӑ курать. Вӑл ертсе пынипе снайперсем нимӗҫсене ҫавӑрса илсе яла пырса кӗрекен ҫула татаҫҫӗ.

Лейтенант Топоров часть штабне тыткӑна илнӗ 40 ҫын, 4 станковой пулемет, 50 автомат ытла ӑсатнӑ.

(ТАСС).

Ютҫӗршыв корреспонденчӗсен черетлӗ пресс-конференцийӗнче

Ютҫӗршыв корреспонденчӗсен июлӗн 19-мӗшӗнче пулнӑ черетлӗ пресс-конференцийӗнче Совет Информаци Бюровӗн начальникӗн заместителӗ С. А. Лозовский юлташ ҫакна паллӑ тунӑ: ССР Союзӗн халӑхӗсем гитлерла Германие хирӗҫ туса пыракан кӗрешў Германи фашизмӗ чуралантарнӑ мӗнпур ҫӗршывсенче ҫӗкленў пуҫарса янӑ, ҫак кӗрешў вӑл ҫӗршывсене пысӑк шанчӑк парать. Францире, Чехословакире, Польшӑра, Югославире, Бельгире, Голландире, Грецире, Норвегире, — пур ҫӗрте те ҫав ҫӗршывсенчи халӑхсем хӑйсене Гитлерӑн вӑрӑ-хурахла шайкисенчен хӑтарассине Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр ҫапӑҫӑвӗпе ҫыхӑнтараҫҫӗ, ССР Союзӗпе Англия хушшинче ҫарпа политика тӗлӗшӗнчен тунӑ союзпа ҫыхӑнтараҫҫӗ.

Ӗлӗкрех чехсен, поляксен, сербсен, норвежецсен, бельгиецсен тата ытти халӑхсен иккӗленў пулнӑ. Франци халӑхне унӑн правителӗсемпе ҫар командованийӗ сутнӑ тата улталанӑ хыҫҫӑн, Францин паха хирӗсемпе хулисене нимӗҫсен атти таптама пуҫланӑ хыҫҫӑн Англия чӑтса тӑма пултарӗ-ши, тесе шухӑшланӑ ҫав халӑхсем. Тепӗр енчен, Гитлер хӑйӗн халӑхне ҫӑмӑл ҫӗнтерўсемпе хӗтӗртсе пынӑ. Анчах та, гитлерла Германи хӑйӗн кӗтӗвӗсене Совет Союзне хирӗҫ ярсан, ССР Союзӗн халӑхӗсем, пӗр ҫын пек пулса, хӑйсен ирӗклӗхне тата наци тӗлӗшпе никама пӑхӑнмасӑр пурӑнас положенине хўтлеме тӑрсан, Совет Союзӗпе Великобритани хушшинче ҫарпа политика тӗлӗшӗнчен союз туса ҫирӗплетсен, гитлеризма хирӗҫ кӗрешес ӗҫре Пӗрлешўллӗ Штатсем Великобританине вӗҫне ҫитиех пулӑшасси пурӑншӗн те паллӑ пулса тӑрсан, — чуралӑха кӗрсе ўкнӗ халӑхсен ӑнланӑвӗнче тивӗҫлӗ улшӑну пулса иртрӗ. Ӗлӗк пулнӑ иккӗленўсем тата пессимизм пӗтсе ларчӗҫ. Халӗ Гитлерӑн оккупациллӗ ҫарӗ ҫине чуралӑха кӗрсе ўкнӗ халӑхсем пур ҫӗрте те вӑйлӑн тарӑхаҫҫӗ, вӗсем Гитлерӑн юнлӑ авантюрин вӗҫӗ ҫывхарса ҫитессе кӗтеҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ пессимизм тата иккӗленўсем Германи халӑхӗн кӑна пур.

Берлинран, Гамбургран, Рур облаҫӗнчен, Баварирен, Саксонирен, Хӗвелтухӑҫ Пруссирен, Австралирен, Судет облаҫӗнчен, — пур ҫӗртен те сведенисем тата тӗрлӗ хыпарсем килеҫҫӗ; ҫав хыпарсем Гитлер ҫарӗсем хавшаса пыни ҫинчен, вӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас вӑхӑт ҫывхарса ҫитни ҫинчен калаҫҫӗ. Германи халӑхӗнчен унӑн политикӑллӑ, экономикӑллӑ прависене, этеме тивӗҫлӗ мӗнпур правӑсене туртса илнӗ, ҫавӑншӑн ӑна нацистсем пӗтӗм тӗнчере пуҫ пулса тӑрассине пама пулнӑ. Анчах Германи халӑхӗ халӗ ҫакна ҫеҫ хӑраса курать: вӑл правасемсӗрех тӑрса юлчӗ, пӗтӗм тӗнчере пуҫ пулса тӑрасси вара, пӗлӗт ҫинчи ҫӑлтӑр пекех, инҫетре.

Гитлер, пӗтӗм тӗнчене пӑхӑнтармалла тесе, хӑйӗн ҫарӗ умне пурнӑҫа кӗртме ҫук задача лартнӑ. Анчах вӑл часах ҫакна курса ӗненчӗ: Тургенев калашле, иллюзисем вилеҫҫӗ, фактсем вара юлаҫҫӗ. Гитлерла Германие хирӗҫ пыракан демократиллӗ халӑхсен пӗрлӗх фрончӗ пулса тӑни, вӑл ҫирӗпленни тата тӗрекленни Германишӗн хӑрушӑ факт пулса тӑрать.

Гитлера тата ытти гангстерсене хирӗҫ пыракан кӗрешўре мӗнпур халӑхсен задачи пӗр пек пулни—ССР Союзӗпе ытти ҫӗршывсем, юлашки ҫулсенче тӗрлӗ сӑлтавсене пула дипломатилле ҫыхӑнусене татнӑ ҫӗршывсем хушшинче дипломатиллӗ ҫыхӑнусене ҫӗнӗрен йӗркелесе яма кирлӗ майсене туса парать. Совет Союзӗ Чехословаки правительствипе дипломатиллӗ ҫыхӑнусене йӗркелесе ячӗ ӗнтӗ, хӑйсене чуралантаракансене хирӗҫ халӗ те кӗрешекен ытти ҫӗршывсен правительствисемпе дипломатиллӗ ҫыхӑнусене ҫӗнӗрен йӗркелесе ярассине те вӑл хирӗҫ пымасть пулмалла.

Вӑрҫӑн шавӗсем тата кӗрлевӗсем витӗр гестапо хӗнесе пӗтернӗ тата вӑл вӗлерекен ҫынсен нӑйкӑшӑвӗ витӗр, мӑшкӑласа пӗтернӗ хӗрарӑмсемпе хӗрсен куҫҫулӗ тата вӗсем йӗрнӗ сасӑ витӗр хытӑрах та хытӑрах миллионсен сасси илтӗнет: «тӑхтӑр-ха, оккупациленӗ ҫӗршывсенче эпир ҫӗнтерӗпӗр! Пирӗн урамра та праздник пулать». Ҫакӑ вӑл—лӑпкӑн кӗтсе ларнин сасси мар, ҫакӑ вӑл — пусарса лартнӑ, анчах чуралантарса ҫитереймен халӑхсен масси. Оккупантсене хирӗҫ хаяр кӗрешў пуҫланчӗ, вӑл анлӑн сарӑлса пырать.

* * *

Юлашки темиҫе кун хушшинче Германири радиопа Германири пичетӗн чарусӑр фантазийӗ геркулесла виҫе таранах асса кайнӑ. Ҫапла, нимӗҫсем каллех пирӗн территори ҫинче хӗрарӑмсен батальонӗсене, вунвиҫӗ ҫулти ачасен полкӗсене тата хӑлхасӑр-чӗлхесӗр ҫынсен полкӗсене «тупнӑ». Ҫав хӑлхасӑр-чӗлхесӗр ҫынсенчен нимӗҫсем ССР Союзӗпе Англин «тискер шухӑшӗсем» ҫинчен «илтнӗ» пулмалла. Кун хыҫҫӑн, Приморьере Пӗрлешўллӗ Штатсене тинӗс-ҫар базисем пани ҫинчен кинеми юмахӗсене каласа параҫҫӗ. Юлашкинчен, нимӗҫсен радиостанцийӗ хӑйӗн малтанхи мӗнпур рекорчӗсене витсе хума йышӑннӑ та, Германи войскисем июлӗн 18-мӗшӗнче пин те пилӗкҫӗр самолет ярса илнӗ, тесе пӗлтернӗ. Вӑт ҫакӑ вара чӑнах та халиччен курман ҫӗнтерў! Темиҫе тумлам чернил пӗтерсех, пин те пилӗкҫӗр самолет ярса илни — ҫакӑ ӗнтӗ ҫитӗнў мар-и вара?

Чӑннипех те, Геббельс суттанталӑкӑн нимӗнле рамкине те вырнаҫаймасть. Ахаль мар калаҫҫӗ: Геббельс мар упӑтерен пулса кайнӑ, упӑте Геббельсран пулса кайнӑ, теҫҫӗ.

Малалла мӗн вара? — тесе законлӑ ыйтни ҫине нимӗҫсен ответлӑ представителӗсем, «Стокгольмс Тиднинген» корреспонденчӗ каланӑ тӑрӑх, ҫапла ответлеҫҫӗ: «Советсене хирӗҫ тунӑ кампани вӗҫленсен ҫийӗнчех, ҫиҫӗм пек хӑвӑртлӑхпа, Англие хирӗҫ кӗрешесси каллех пӗрремӗш вырӑна тухса тӑрать».

Улита пырать, хӑҫан та пулин пулать, анчах тата ӑҫта лакса ларӗ-ши?

Анчах тӗнче кунҫулӗ мӗнле пуласси Гитлерпа Геббельсран мар, ирӗклӗхе юратакан халӑхсен пӗрлӗх фронтӗнчен килет. Ку ӗнтӗ этемлӗх телейӗ.

Нимӗҫ салтакӗсем Болгари халӑхӗнчен мӑшкӑлани

БЕРН, июлӗн 17-мӗш. (ТАСС). Кунта нумаях пулмасть Болгарирен ютҫӗршыв журналисчӗсем килсе ҫитнӗ. Вӗсем каласа панӑ тӑрӑх, Германин Болгарири салтакӗсем вырӑнти халӑха ҫавтери хыттӑн тыткалаҫҫӗ. Германи командованийӗ юлашки вӑхӑтчен Болгарири халӑх пурӑнакан нумай пунктсенче салтаксен пысӑк мар групписене ҫеҫ тытса тӑнӑ, вӑл салтаксем ҫак «туслӑ» ҫӗршывра йӗркелӗх тытса тӑмалла пулнӑ. Яланхи пекех вӑл салтаксем хушшинче гестапо агенчӗсем те пур, вӗсем Болгари хресченӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсем мӗнлине сӑнаҫҫӗ, «шанчӑксӑр» тата «шухӑш енчен ҫирӗп мар» элементсене тытас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ. Салтаксенчен нумайӗшӗ, уйрӑмӑнах хӑйсен начальникӗсенчен аякри вырӑнсенче тӑракансем, тӑтӑшах ӗҫеҫҫӗ, халӑха куҫкӗретӗнех ҫаратаҫҫӗ тата ирӗксӗрлеҫҫӗ. Салтаксем болгарсен йӑлапа тӗн тӗлӗшӗнчи традицийӗсем, уйрӑмӑнах вӗсен славянла шухӑш-туйӑмӗ тӗлӗшпе мӑшкӑласа кулаҫҫӗ. Журналистсем ҫакӑн пек тӗслӗх ҫинчен каласа кӑтартнӑ: Болгари ялӗсенче праздниксенче ҫитӗнсе ҫитнӗ халӑх «хоро» текен халӑх ташшине коллективлӑн ташлама яланах урама тухать. Нумаях пулмасть Пазарджик хули ҫывӑхӗнчи ялсенчен пӗринче Германин лавсемпе пыракан ўсӗр салтакӗсем ташлакансен ушкӑнӗ ҫине пырса кӗрсе темиҫе ҫыннӑн урисене ыраттарса пӗтернӗ. Болгарири арҫынсемпе йӗкӗтсем хӑйсен «союзникӗсене» хытӑ хӗненӗ, вӗсене ял тулашне турттарса тухнӑ та лашисене ҫул тӑрӑх янӑ. Салтаксем ҫавтери ўсӗр пулнӑ, кайран начальствӑна хӑйсене хӑш ялта хӗнени ҫинчен те каласа пама пултарайман.

Германи салтакӗсем Болгарири хӗрарӑмсемпе хӗрсем ҫине выльӑх ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ. Германи салтакӗсем шкулта вӗренекен хӗрачасенчен мӑшкӑлласси анлӑн сарӑлнӑ пирки ҫак ӗҫе ҫутӗҫ министерствин хутшӑнмалла пулнӑ.

Женевьева Табуи пӗлтерни

НЬЮ-ИОРК, июлӗн 17-мӗш. (ТАСС). Французсен паллӑ журналистки Женевьева Табуи ТАСС корреспондентне ҫапла каласа панӑ: «Бастилие туртса илнӗ кун ячӗпе Франци патриочӗсем Англипе Совет Союзӗ хушшинче пакт тунине хаваслӑн саламлаҫҫӗ, вӑл пакт, Хӗрлӗ Ҫар Гитлера кўнӗ поражениесемпе пӗрлех, дипломатиллӗ тӗнчере Гитлера питех те вӑйлӑн ҫапни пулса тӑрать, ун пеккине Гитлер халиччен курман-ха. Ҫак килӗшў пирӗн халӑха шанӑҫпа хӑюллӑх парса хавхалантарчӗ. Пирӗн халӑхӑн пысӑк ҫапӑҫусем туса пымалла тата нацистсен тарҫисене хирӗҫ пур ҫӗршывсенче те татӑклӑ ответ памалла пулать. Пирӗн халӑх Гитлера хирӗҫ хаяррӑн кӗрешме шутлать тата нацистсен агрессине хирӗҫ протест тӑвасси кунран кунах вӑйланса пырать».

Эптон Синклер пӗлтерни

НЬЮ-ИОРК, июлӗн 17-мӗш. (ТАСС). Америкӑри паллӑ писатель Эптон Синклер ТАСС отделенине телеграмма янӑ, ҫав телеграммӑра вӑл Англипе Совет Союзӗ хушшинче тунӑ килӗшӗве икӗ ҫӗршывӗ те ӑслӑ утӑм туни вырӑнне хурса саламлать. Синклер ҫак килӗшўн пысӑк малашлӑхӗ ҫинчен калать.

„Нью-Йорк таймс“ хаҫат Англи авиацийӗ Германи хулисем ҫине бомбӑсем пӑрахни ҫинчен

НЬЮ-ИОРК, июлӗн 19-мӗш. «Нью-Йорк таймс» хаҫат, Германирен килсе ҫитнӗ дипломатсенчен илнӗ сведенисем ҫине кӑтартса парса, ҫапла пӗлтерет: «Юлашки ултӑ эрне хушшинче Англи авиацийӗ Хӗвеланӑҫ Германи ҫине нумай хутчен тапӑннӑ, чугунҫул линийӗсене пысӑккӑн сиенленӗ. Ҫавна май хӑшпӗр пысӑк хуласене продовольстви илсе пырасси йывӑрланнӑ. Рейн облаҫӗнчи аркатса тӑкнӑ облаҫсенчен нумайӗш рабочисене урӑх ҫӗре куҫараҫҫӗ. Унта пурӑнма юлнӑ ҫынсем апат-ҫимӗҫ продукчӗсем ҫитменнипе, хула хуҫалӑхӗн ӗҫӗ арканса кайнипе хытӑ аптӑраҫҫӗ. Уйрӑмӑн илсен, шыв пӑрӑкисемпе канализаци системи сиенленнӗ пирки ҫав хуласене сикекен чирсем хӑратса тӑраҫҫӗ. Германири, уйрӑмах Рейн облаҫӗнчи индустриллӗ пысӑк хуласенчи, ҫавӑн пекех тата Бременпе Гамбургри халӑх чылай пысӑк хуйха ўкнӗ, тесе пӗлтереҫҫӗ. Кӗркуннехи тата хӗллехи вӑрӑм ҫӗрсенче вӗҫсе пырса бомбӑсем вӑйлӑн пӑрахма пултараҫҫӗ, ҫакӑнтан ҫӑлӑнас тесе нумайӗш ҫемьесем ялсене тухса кайма тӑрӑшаҫҫӗ».

Ҫав хаҫатах ҫапла пӗлтерет: «Англи самолечӗсем Дюссельдорф ҫине бомбӑсем пӑрахнине пула, хула ишӗлсе пӗтнӗ, тӗтӗм-сӗрӗмпе йӑсӑрланса выртать. Сывлӑшран ҫӗрле вӑйлӑн пыра-пыра тапӑннипе англичансем Гамбургпа Бременри порт сооруженийӗсене стройран кӑларнӑ. Ҫавӑн пекех нумаях пулмасть Ганновер ҫине ҫавтери вӑйлӑн бомбӑсем пӑрахса ҫӗмӗрнӗ, вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа кун пек вӑйлӑн ҫӗмӗрни ку тариччен пулман-ха. (ТАСС).

Англи авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, июлӗн 19-мӗш. Англин информаци министерстви июлӗн 19-мӗшӗнче ирхине Англин ҫыранри авиацийӗн самолечӗсем Норвеги ҫыранӗ ҫывӑхӗнче противникӑн грузовой суднине тапӑнни ҫинчен тӗплӗн пӗлтерет. Англи самолечӗсем Германи суднисене Норвеги ҫыранӗ ҫывӑхӗнче курнӑ та, ӑна аялтан вӗҫсе пырса атакӑланӑ. Темиҫе бомбӑпа сиенленине пула судно хытӑ тайӑлса кайнӑ, хӑвӑртлӑхне чакарнӑ. Вӗҫнӗ вӑхӑтра Англи летчикӗсем Норвеги пулӑҫисем хӑйсен килӗсенчен тухса, Англи летчикӗсене аллисене сулса саламланине курнӑ.

Июлӗн 19-мӗшӗнче кӑнтӑрла Англи бомбардировщикӗсем Голланди ҫыранӗсем патӗнче противник суднисен караванне тапӑннӑ, ҫав суднӑсене зенитнӑй орудисемпе хӗҫпӑшалланнӑ пароходсем хўтлесе пынӑ. Ҫав караван составӗнчи пароходсенчен тӑваттӑшне пӗтерсе тӑкнӑ. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ кашниех 6-шар пин тоннажлӑ пулнӑ. Тӑваттӑмӗш пароходӗ бомба пырса ўкнипе взрыв пулса сирпӗннӗ, унӑн тоннажӗ 4 пин тоннӑна яхӑн пулнӑ.

(ТАСС).

ЛОНДОН, июлӗн 20-мӗш. (ТАСС). Официаллӑ йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Англи авиацийӗ Германин Аахен тата Мюнстер хулисем ҫине тапӑнса, вӗсен виҫҫӗмӗш пайне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Вилнисем питӗ нумай, пысӑк сиен кўнӗ, сиен кўнине тепӗр хут майлаштарма, ҫине тӑрса ӗҫлесен те, темиҫе уйӑх кирлӗ. Июлӗн 10-мӗшӗнче каҫхине Аахен хули ҫине уйрӑмах вӑйлӑн бомбӑсем пӑрахнӑ. Шыв пӑрӑкине, газ хуҫалӑхне, электричествӑна, телефона сиенленӗ, хулари транспорт ӗҫӗ пӑсӑлнӑ.

Нумай пулмасть сывлӑшран пилӗк хутчен тапӑннӑ хыҫҫӑн Мюнстер хулинче пушарпа уйрӑм районсем йӑлтах пӗтнӗ. Ҫапла вара Геринг пӗр бомба та Германи хулисем ҫине ўкес ҫук, тесе мухтанса сўпӗлтетни пушӑ сӑмах кӑна пулса юлчӗ.

Японин ютҫӗршыв ӗҫӗсен ҫӗнӗ министрӗ тунӑ заявлени

ТОКИО, июлӗн 19-мӗш. Домей Цусин агентстви ҫапла пӗлтерет: «Японин ютҫӗршыв ӗҫӗсен ҫӗнӗ министрӗ Тойода энер: Японин тулашри политикинче нимӗнле улшӑнусем те пулмаҫҫӗ, тесе кӑтартса пачӗ».

Пичет представителӗсемпе калаҫнӑ чухне Тойода ҫапла пӗлтернӗ: «Ҫӗнӗ кабинетӑн политики кунчченхи кабинетӑн политики пекех пулать-ши—эпӗ кун пирки калама пултараймастӑп. Анчах та, виҫӗ ҫӗршыв хушшинче тунӑ пакт тата Китайри конфликта татса парасси пирӗн нациллӗ программӑн никӗсӗсем пулса тӑраҫҫӗ пулсан, кабинет улшӑнни ҫак проблемӑсемпе ҫыхӑнса тӑракан политикӑна нимӗн чухлӗ те улӑштармаҫҫӗ».

Японипе США хушшинчи отношенисем ҫинчен тӑракан ыйтӑва тапратса, Тойода ҫапла каланӑ: «Ҫӗнӗ кабинет ҫак ыйту ҫине пысӑккӑн ҫавӑрӑнса пӑхӗ», тенӗ. «Анчах та,—тесе хушнӑ вӑл, — малтан Коноэпе тата кабинетӑн ытти членӗсемпе калаҫса пӑхмасӑр кун пирки нимӗн те пӗлтерме пултараймастӑп».— Дипломатин, — тесе каланӑ Тойода, — «хӑйне хӑй мӗнле тыткаламалли ҫинчен туса ҫирӗплетнӗ правилӑсемпе нормӑсенчен вӑтанмалла мар». (ТАСС).

Германи халӑхӗ кулянма пуҫланӑ

НЬЮ-ИОРК, июлӗн 19-мӗш. «Таймс» журналӑн нумаях та пулмасть Германирен таврӑннӑ корреспонденчӗ Германи халӑхӗ мораль тӗлӗшӗнчен йывӑррӑн пусӑрӑнни ҫинчен пӗлтерет. — Германи халӑхӗ,—тенӗ вӑл,—уйрӑмӑнах ҫамрӑксем, вӑрҫӑна ку тариччен те кӑмӑлламан пулсан, халӗ вара Германия йӑлтах пӗтессине туйса тӑраҫҫӗ. Ҫитӗннӗ ҫынсем тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑ мӗнпе вӗҫленнине час-часах аса илсе шикленеҫҫӗ, ҫак вӑрҫӑра та Германи парӑнассине туяҫҫӗ. Корреспондент ҫавӑн пекех тата ҫакӑн ҫинчен каласа панӑ: Англи авиацийӗ вӑйлӑн пырса тапӑннине пула Гамбург тата Кельн хулисене пысӑккӑн ҫӗмӗрнӗ, тенӗ. (ТАСС).

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
об'являет, что ПРИЕМ СТУДЕНТОВ
на 1941—42 учебный год ПРОДОЛЖАЕТСЯ.
Институт имеет зоотехнический и полеводческий факультеты.
СРОК ОБУЧЕНИЯ 3—3½ ГОДА

Начало приемных испытаний 1 августа.

Дети рядового и начальствующего состава, призванные в ряды Красной Армии и Военно-Морского Флота, от платы за обучение освобождаются.

АДРЕС: гор. Чебоксары, Ленинградская, 25. Сельхозинститут.

ДИРЕКЦИЯ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ
ОБ'ЯВЛЯЕТ ПРИЕМ СТУДЕНТОВ
на 1941—1942 учебный год

Техникум готовит техников-строителей по промышленному и гражданскому строительству.

Срок обучения 3 года. Прием заявлений с 5 мая до 10 августа, к заявлению должны быть приложены следующие документы:
а) Автобиография;
б) Свидетельство об окончании НСШ (в подлиннике);
в) Три фотокарточки (снимок без головного убора);
г) Свидетельство о рождении;
д) Справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных);
е) Паспорт пред'является при личной явке.

Приемные испытания с 11 по 20 августа по следующим предметам:

1. По русскому языку (устно и письменно).
2. По математике (устно и письменно).
3. По физике (устно).
4. По Конституции (устно).

Выдержавшие приемные испытания по 2/3 предметам на отлично и 1/3 на хорошо с 1 сентября зачисляются на стипендию.

Отличники НСШ принимаются без испытаний и с 1-го сентября зачисляются на стипендию.

Принятые в техникум обеспечиваются общежитием.

Начало занятий с 1-го сентября. Заявления направлять:

Город Чебоксары, Чувашская АССР, улица Плеханова, 7, Коммунально-Строительный техникум.

Для ответов должны быть вложены в конверт почтовые марки на 60 коп.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, ялхуҫалӑхӗпе промышленность пайӗсен — 0—88, ҫырусемпе рабсельнорсен пайӗн — 2—30, дежурнӑйӑн — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2561.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 345. ф. б. эб_84 п. л.